ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Сентябрь 20 ВЫРСАРНИКУН № 185 (9094)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Ялхуçалăхне малалла вăйлатассишĕн кĕрешесси — пĕтĕм халăх ĕçĕ: Н. Орлов.—Кĕрешӳпе çĕнтерӳсен аслă программи; **В. Чернов.**—Лайăх ĕçлеме хавхалантаракан постановлени (1 стр.).
Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Посольствинче пулнă йышăну (1 стр.).
Районсенчи партконференцисем (2 стр.).
Г. Андреев.—Пĕтĕм тĕнчери çирĕп миршĕн (2 стр.).
РАЙОНТИ ХАÇАТСЕМ ПЕЛТЕРЕÇÇĔ (2 стр.).
Коммунизмшăн хĕрӳллĕ кĕрешнĕ паттăрсем. Бакури 26 комиссара персе пăрахнăранпа 35 çул тултарнă тĕле (2 стр.).
Продукци пахалăхĕшĕн кĕрешни—халăх ырлăхĕшĕн тăрăшни. Шупашкарти чăлха фабрикинче ĕçлекенсен пĕрлехи пухăвĕнчен (3 стр.).
Совет Союзĕ тăванла пулăшни—Китай экономикине аталантарас ĕçре пысăк фактор пулса тăрать. Финанспа экономика комитечĕн председателĕн заместителĕ Ли Фу-чунь тунă доклад (4 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин Генеральнăй комитечĕн ларăвĕ (4 стр.).
Америка Гренландие оккупацилет (4 стр.).
Аденауэр ушкăнĕ Хĕвеланăç Германири ĕçсыннисен прависем çине тапăнать (4 стр.).

Совет çĕршывĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли программа

Нумаях пулмасть Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум Н. С. Хрущев юлташ докладĕ тăрăх «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕ. Çак постановлени, Совет Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли программа пулса, коммунизм обществи тăвассишĕн кĕрешес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви социализмла çĕршыв экономикипе халăх культурине вăйлатассишĕн пĕрмай тăрăшаççĕ. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе туса çирĕплетнĕ социализмла ялхуçалăхĕ хăватлă индустрилле-техникăлла никĕс çинче тытăнса тăрать. Социализмла ялхуçалăхĕ—чи шултра тата чи лайăх механизациленĕ ялхуçалăхĕ. Колхоз стройĕ хресченсен вак таварлă хуçалăхĕнчен те, капитализмла шултра хуçалăх производствинчен те малта тăнине кăтартса пачĕ.

Пирĕн колхоз стройĕ хăйĕн иксĕлми вăй-хăватне мирлĕ строительство çулĕсенче те, вăрçă чухнехи йывăр çулсенче те уççăн кăтартса пачĕ. Вăрçă çулĕсенче чылай юхăннă пулин те, вăрçă хыççăнхи çулсенче пирĕн социализмла ялхуçалăхĕ хăвăрт ура çине тăчĕ. Тырă акса тăвасси вăрçăччэнхи шайран та иртрĕ. Халĕ пирĕн çĕршывăн тырă çителĕклĕ. Техникăлла культурăсем, уйрăмах çĕр мамăкĕпе сахăр кăшманĕ, туса илесси чылай ӳснĕ.

Вăрçă çулĕсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç пурнинчен ытла юхăннăччĕ. Колхозсемпе совхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри йывăрлăха та тӳссе ирттерчĕç, кĕске вăхăт хушшинчех выльăх-чĕрлĕх хисепне нумай ӳстерчĕç. Выльăх-чĕрлĕх йышĕ нумайланни государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлессине ӳстерме май пачĕ.

Колхоз производстви пур енĕпе те малалла аталанса пынă май колхозсен обществăлла пурлăхĕ нумайланчĕ, колхозниксем укçан тата натурăпа илекен тупăшсем ӳссе пыраççĕ.

«Халĕ,—тесе каланă КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕн решенийĕнче,—пирĕн çĕршывра чи лайăх техникăпа хĕçпăшалланнă хăватлă индустри туса хунă, колхозсем чылай çирĕпленчĕç, çак никĕс çинче ĕнтĕ ялхуçалăхĕн пур отраслĕсене те хăвăрт вăйлатма тата икĕ-виçĕ çул хушшинче пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăха апат-çимĕç продукчĕсем уйрăмах нумай парса тăма, çакăнпа пĕрлех колхоз хресченĕсен пĕтĕм массин материальнăй пурнăçне ытларах лайăхлатма кирлĕ условисем пурте пур».

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ялхуçалăхĕ калама çук пысăк резервсемпе, малалла аталанса пымалли майсемпе çителĕклĕ усă курманнине, ялхуçалăхĕнче мĕнле çитменлĕхсем пуррине уççăн палăртрĕ. Нумай колхозсенче тата районсенче тĕштырăпа техникăлла культурăсен тухăçĕ пĕчĕккĕ, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çитменлĕхсем нумай, выльăх-чĕрлĕх хисепĕ юлашки çулсенче ытла та ерипен ӳсет, пахча çимĕçсем туса илес ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур.

Çав çитменлĕхсен тĕп сăлтавне палăртса, Пленум ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине кăтартса пачĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановленире çапла калать:

«Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те ăнăçлă аталантарма кирлĕ услови пулса тăракан индустрие пур майсемпе те вăйлатас çула Коммунистсен партийĕ çирĕп тытса пычĕ, çак çулпа пырса вăл пысăк çитĕнӳсем турĕ. Пуринчен ытла халăх хуçалăхĕн çак чи кирлĕ задачине татса пама тăрăшнă, тĕп вăйсемпе укçа-тенкĕ çакăнта кайнă. Çĕршыва индустриализацилес ĕçре пирĕн чи лайăх кадрсем ĕçленĕ. Пирĕн йывăр индустрие те, ялхуçалăхне те, çăмăл промышленноçа та, пĕр вăхăтрах пысăк хăвăртлăхсемпе аталантарма май пулман. Çакна тума малтанлăха кирлĕ условисем хатĕрлемелле пулнă. Халĕ çав условисене туса хатĕрленĕ. Пирĕн хăватлă индустри никĕсĕ, ӳссе çирĕпленнĕ колхозсем, хуçалăх строительствин пур отраслĕсенче те вĕреитсе ӳстернĕ кадрсем пур ĕнтĕ.

Анчах ялхуçалăхĕн паха отраслĕсем чылайăшĕ юлса пынин ытти сăлтавĕсем те пур, вăл сăлтавсем пирĕн ĕçри çитменлĕхсенчен, ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсенчен, урăхла каласан пирĕнтен хамăртан килеççĕ».

Хамăртан килекен сăлтавсенчен пĕри ялхуçалăхĕнче производствăна аталантарма, унăн тупăшлăхне ӳстерме работниксене пурлăх тĕлĕшпе хавхалантарас принципа пăсни пулать.

Государствăна тырпул тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене çĕр лаптăкĕ тăрăх памалли принципа хатĕрлев ĕçĕнче час-часах пăснă. Лайăхрах ĕçлекен, çавна май малта пыракан колхозсене задансем ытларах парса пынă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç, çавнашкалах пахча çимĕçсем туса илес ĕç юлса пыни, ялхуçалăхĕн çав отраслĕсене аталантарма государство çителĕклĕ хавхалантарса пыманнинчен те килнĕ.

Ялхуçалăх артелĕнче Устав хушнă пек обществăлла интереса харпăр хăй интересĕпе тĕрĕс çыхăнтарса ĕçлени колхоз производствине çĕклентерсе пырассинче питĕ кирлĕ услови пулса тăрать. Анчах çав принципа та чылай колхозсенче пăснă. Колхозникăн кил вырăнĕнчен ӳстернĕ нормăсем тăрăх продуктсем илмелле тунă пирки, налог политикине пăснă пирки колхозниксем хăйсен килĕнче выльăх усрасси чакнă.

Ялхуçалăхĕн питех те кирлĕ отраслĕсем юлса пынин тĕп сăлтавĕ ялхуçалăхне панă хăватлă техникăпа пачах çителĕксĕр усă курни пулать. Ялхуçалăхĕнче кăткăс машинăсемпе вăхăтлăха ĕçлеме илнĕ çынсене ĕçлеттерни ĕç тухăçлăхне нумай чакарнă. Çавăн пекех ялхуçалăх специалисчĕсемпе усă курассинче те çирĕп йĕрке пулман, специалистсем нумайăшĕ производствăлла ĕçе хутшăнман.

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕн постановленийĕнче ялхуçалăхĕнчи мĕнпур çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса панă.

Пленум постановленийĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатмалли майсене те кăтартса панă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатас пулсан, чи малтанах, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе вăйлатмалла, выльăх витисем çителĕклĕ пулмалла, выльăх фермисенчи ĕçсене механизацилемелле, çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес ĕçе лайăхлатмалла. Халĕ выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, çĕрулми тата пахча çимĕç хатĕрлемелли хака чылай ӳстернĕ. Çапла туни малашне ялхуçалăхĕн çак отраслĕсене аталантарма нумай пулăшĕ.

Пленум çĕрулми тата пахча çимĕç лартса тăвас ĕçе анлăлатма кирлине кăтартса пачĕ. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче çак продуктсем хула халăхĕпе промышленность валли, çĕрулми выльăх-чĕрлĕх апачĕ валли те çителĕклĕ пулмалла. Çапла вара çĕрулмине пахча çимĕç лартмалли лаптăка та, вĕсен тухăçлăхне те çитес çулсенче хăвăрт ӳстермелле.

Пленум тĕштырă акса тăвассине ӳстерме кирлине те кăтартса пачĕ. Тĕштырă хуçалăхĕ ялхуçалăх производствин никĕсĕ пулса тăрать. Çавăнпа та Пленум тĕштырă тата техникăлла культурăсене малалла та ытларах туса илме кирлине кăтартса хăварчĕ.

Центральнăй Комитет Пленумĕн постановленийĕнче машина-трактор станцисен ĕçне лайăхлатмалли тата ялхуçалăхне малалла механизацилемелли мерăсене кăтартса панă. МТС-сен ĕçне лайăхлатассинче механизаторсем ялан ĕçлекен кадрсем пулмалла туни уйрăмах паха пулса тăрать. 1954 çултан пуçласа 1957 çулти май уйăхне çитиччен ялхуçалăхне, 15 лаша вăйлĕ трактор çине куçарса шутласан, çĕнĕрен 500 пин трактор тата рет хушшисене çемçетнĕ чухне ĕçлемелли 250 пин трактор памалла.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени пирĕн социализмла ялхуçалăхне хăвăрт аталантарма аслă çул уçса парать. Совет халăхĕ, мĕнпур рабочисемпе колхозниксем, интеллигенци Пленум йышăннă решение хапăл туса йышăнчĕç.

«1946 çулхипе танлаштарсан, пирĕн колхоз обществăлла хуçалăхран илекен тупăш икĕ хут ӳсрĕ. Тырпул тухăçĕ те, выльăх-чĕрлĕхрен илекен продукци те нумайланчĕ. Анчах эпир тата лайăхрах ĕçлеме пултарнă. Пленум постановленийĕ колхоз стройĕн иксĕлми вăй-хăватне кăтартса пачĕ»,—тенĕ «Красное Сормово» колхоз (Красноармейски район) председателĕ Г. Карташов юлташ колхозниксен пухăвĕнче. Пленум решенийĕпе хавхаланса, Первомайски районĕнче ĕлĕкрех тракторист пулса ĕçленĕ колхозниксем халĕ МТС-сене каллех тракторист пулса ĕçлеме таврăнаççĕ.

Партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртесси, паллах, хăй тĕллĕн пулса пырас çук. Парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем колхозсемпе совхозсене ертсе пырассине нихçанхинчен ытларах лайăхлатни кирлĕ. Чи малтанах кадрсене çирĕплетмелле. Колхозсене, совхозсене, МТС-сене ертсе пыракансем квалификациллĕ, ĕçе тĕплĕ пĕлекен çынсем пулччăр тесе тăрăшмалла.

Пленум постановленийĕ ялхуçалăхне малалла хăвăрт аталантарса пыма кирлĕ условисене пурне те туса парать. Çав условисемпе усă курса, парти организацийĕсем колхозниксемпе механизаторсене ялхуçалăхĕнче хăватлă çĕкленӳ тăвас ĕçре хуллен ертсе пыма тивĕçлĕ. Вырăнти парти организацийĕсен паянхи задачи — Пленум йышăннă постановлене тата Н. С. Хрущев юлташ тунă доклада колхозниксемпе ялхуçалăх механизаторĕсене тĕплĕн ăнлантарса парса, ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилесси пулать.

Ялхуçалăхне малалла вăйлатассишĕн кĕрешесси—пĕтĕм халăх ĕçĕ

* * *

Трактористсем МТС-а таврăнаççĕ

ПЕРВОМАЙСКИ. Ялхуçалăхĕнчи механизаторсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановление тĕплĕн вĕренеççĕ. МТС-сенче техникăпа чи туллин тата тухăçлăн усă курма пултаракан тата çапла майпа колхоз производствин мĕнпур отраслĕсене малалла аталантарма пулăшакан квалификациллĕ механизаторсен яланхи кадрĕсене хатĕрлесси парти, совет тата ялхуçалăх органĕсен чи кирлĕ задачи пулать.

Иртнĕ çулсенче МТС-ран пăрахса кайнă вуншар трактористсемпе комбайнерсем халĕ МТС-а каялла таврăнма заявлени параççĕ. Вĕсем кашниех, парти чĕнни çине ответлесе, ялхуçалăхĕнче çĕнĕрен пĕтĕм вăй-хăватпа пултарулăха хурса ĕçлеме пулаççĕ.

Çавăн пек заявленисене пирĕн МТС-а иртнĕ икĕ кун хушшинче 13 çын илсе пычĕç. Вĕсенчен хăшпĕрисен ячĕсене асăнма юрать.

А. Сергеева юлташ Хрущев ячĕпе тăракан колхоз членĕ. Вăл Канашри механизаци шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Ун хыççăн МТС-ра чылай вăхăт хушши тракторист пулса ăнăçлă ĕçленĕ. Халĕ А. Сергеева юлташ çĕнĕрен тракторист пулса ĕçлесшĕн.

А. Кириллов юлташ та комбайнпа ĕçлеме Канашри механизаци шкулĕнче вĕреннĕ. Кун хыççăн МТС-ра комбайнер пулса сакăр çул хушши ĕçленĕ. Икĕ çул каялла вăл МТС-ран кайрĕ. Пултаруллă комбайнер халĕ МТС-а таврăнма кăмăл тăвать.

Совет Çарне А. Коробов тракторист МТС-ран кайнă. Квалификациллĕ механизатора çартан таврăннă хыççăн, эпир ăна МТС-а ĕçе таврăнма чĕнтĕмĕр. Анчах вăл районти «Коммунăр» промартельте йывăç суракан рамщик пулса ĕçлеме кăмăл турĕ. Халĕ А. Коробов юлташ çĕнĕрен МТС-сен хăватлă техникине тухăçлă ĕçлеме кăмăл тăвать.

А. СМИРНОВ,
Первомайски МТС-ĕн директорĕ.

Пысăк хаваслăхпа

СЕНТĔР. Пĕрлешсе пысăкланнă «Броневик» колхоз кăçал тырпула кĕске вăхăтра пухса кĕртрĕ, государствăна тырă памалли плана августăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ 1953 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановление колхозниксем радио тăрăх пысăк хаваслăхпа итлерĕç. Вĕсем хушшинче социализмла ăмăрту тата анлăн сарăлчĕ.

Пур бригадăсенче те халĕ октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерсе, кĕркунехи ĕçсене пурне те вĕçлессишĕн социализмла ăмăрту пырать.

— Колхоз пирĕн пуянланса пырать, — тет колхоз председателĕ коммунист П. Сурский юлташ.—Икĕ çул хушшинче сĕт-çу парса икĕ автомашина илтĕмĕр, кăçал колхозниксен килĕсене радио кĕртнĕ, двигатель илтĕмĕр, часах пур колхозниксен килĕсене те электричество кĕртетпĕр. Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн колхозниксем пысăк хаваслăхпа ĕçлеççĕ.

В. САПТЕЕВ.

Кĕрешӳпе çĕнтерӳсен аслă программи

«Красное Сормово» колхоз итемĕсенче электромоторсем пĕр тикĕс кĕрлеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем икĕ молотилкăпа авăн çапаççĕ. Мотор вăйĕпех «ВС-2» веялка-сортировкăсемпе тырă тасатаççĕ.

Ял ĕçченĕсен хастарлăхĕ пысăк, вĕсем ĕçе юратса тăваççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе çĕнĕ постановлени йышăнни çинчен пĕлеççĕ, вĕсенчен чылайăшĕ çав постановление тата Н. С. Хрущев юлташ пленумра тунă доклада радио тăрăх вуласа панине итленĕ.

Паян, акă, колхоза парти райкомĕн секретарĕ Н. Егоров юлташ килнĕ. Итем çинче митинг пулса иртрĕ. Егоров юлташ пленум йышăннă постановленипе халăха тĕплĕн паллаштарчĕ, колхозниксен ыйтăвĕсем çине ответсем пачĕ.

Кашнинĕнех паллă, парти йышăннă постановлени колхозниксен пурнăçне нумай çĕнĕллĕхсем кĕртет, парти колхозсен обществăлла хуçалăхне малалла вăйлатма, колхозниксен пурнăçне лайăхлатма хушать, ялхуçалăх производствинче кĕске вăхăтрах татăклă çитĕнӳ тума чĕнет.

— 1946 çулхипе танлаштарсан, пирĕн колхоз обществăллă хуçалăхран илекен тупăш икĕ хут ытла ӳсрĕ. Тырпул тухăçлăхĕ те, выльăх-чĕрлĕхрен илекен продукци те нумайланчĕ. Анчах эпир тата лайăхрах ĕçлеме пултарнă. Пленум постановленийĕ колхоз стройĕн иксĕлми вăй-хăватне кăтартса пачĕ,—терĕ митингра колхоз председателĕ Г. Карташов юлташ.

Колхозниксем обществăлла хуçалăха нумай хут вăйлатма май пуррине, çав майсемпе халиччен кирлĕ пек усă курманнине тĕслĕхсемпе кăтартса пачĕç.

— К. Гаврилова доярка хамăр фермăрах хăй пăхакан ĕнесенчен 1.400-шер литр сĕт суса илчĕ, сысна ферминче те В. Смирнова юлташ хăй пăхакан сысна амисенчен çулсеренех çурасем нумай илсе пăхса парать. Анчах вĕсен опытне колхозра халиччен япăх сарса пынă, ытти дояркăсемпе свинаркăсене çавăн пек тухăçлă ĕçлеме майсем туса паман,—тет Т. Никитина колхозница.

Ф. Фомина колхозница çапла каларĕ:

— Хамăрăн тăван парти йышăннă постановлени çине эпир ĕçпе ответлĕпĕр. Пирĕн пурнăçа лайăхлатма тăрăшнăшăн—пысăк тав. Эпĕ кунта кантăр çинчен каласшăн-ха. Колхоза пысăк тупăш парать вăл. Пирĕн бригадăра ăна пысăк тухăçлă ӳстернĕ пулсан, ытти бригадăсенче вара унăн тухăçлăхĕшĕн тивĕçлипе кĕрешмерĕç. 5-мĕш бригадăра пусан пахалăхне пăсрĕç. Ăна шыва хутнă хыççăн сарса мар, купаласа хучĕç те вăл вара стандартлă нормерпе каймалли сӳс, пулаймарĕ. Çапла, хамăр япăх ĕçленипех обществăлла хуçалăх тăкак тӳсрĕ.

Колхозниксем, пленум постановленине ăнланнă май, хуçалăхри ĕçсене хăвăртрах механизацилеме кирлине палăртаççĕ. Вĕсем гидроэлектростанцин пĕвине чулпа бетонран тума, станцин вăйне пысăклатма сĕнеççĕ.

Н. ОРЛОВ.
(Хамăр корр.).

Красноармейски районĕ.

Лайăх ĕçлеме хавхалантаракан постановлени

Районти колхозниксемпе колхозницăсем, МТС механизаторĕсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановленине пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Хальхи вăхăтра колхозниксем ĕçлекен кашни участокрах чĕрене хумхантаракан савăнăçлă сăмахсем итлеме пулать.

«За коммунизм» колхоз. Çурт-йĕр тунă çĕрте ĕçлекен колхозниксем Ункă шывĕ хĕрне, кăçал туса лартнă çĕнĕ вите патне пухăнса ларнă. Стандартлă вите. Ăна шултра пĕренесенчен пуранă, урайне цементласа тунă. Строительство бригади тăрăшса ĕçленĕ. Халĕ бригада сурăх вити тăвать. Ку та пысăк пулать. Строительсем ăна октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме тăрăшаççĕ.

Колхозăн обществăлла хуçалăхĕ вăйлă аталанни çинчен калакан тĕслĕхсем кунта нумай. Анчах тунă çитĕнӳсемпе колхозниксем лăпланса лармаççĕ. Вĕсем колхоз производствине коммунистсен партийĕ кăтартса панă пек организацилесе малалла аталантарма, обществăлла хуçалăха тĕреклетсе пыма тупа тăваççĕ.

Артель тĕштырă, пахча çимĕç хатĕрлесе памалли обязательствăсене срокчен пурнăçланă, халĕ Уставпа пăхнă фондсене тăвать. Колхозниксем кăçал ĕçкунĕсем çине 3-шер килограмм тĕштырă илеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. Выльăх-чĕрлĕхрен колхоз çулсеренех пысăк тупăш илет. Иртнĕ çулта çак тупăш 130 пин тенкĕ пулнă пулсан, кăçал 160 пин тенкĕрен иртет. Кăçалхи 8 уйăх хушшинче кăна выльăх-чĕрлĕх продукцине государствăна парса тата пасарта сутса 84.234 тенкĕ тупăш илнĕ. Артель çак çулшăн государствăна аш-какай, сĕт, çăмарта памалли обязательствăсене срокчен тултарчĕ те 1954 çул шучĕпе 27 центнер аш-какай, 10 пин литр сĕт, 8 пин çăмарта парса хучĕ.

— Партипе правительство йышăннă çĕнĕ постановлени тăрăх колхозсем государствăна паракан продуктсен хакĕсем чылай ӳсеççĕ. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли çĕнĕ йĕркесем колхозниксене укçа-тенкĕ çителĕклĕ таран валеçсе пама лайăх май туса параççĕ,—тет В. Леонтьев юлташ.

— Пирĕн фермăра 150 килограмм таякан сыснасем сахал мар. Эпир выльăхсен ăратне лайăхлатса пыма, кашни амаран ытларах çура илессишĕн кĕрешме пулатпăр,—тет сысна тата чăх-чĕп фермисен заведующийĕ пулса ĕçлекен коммунист Е. Махов юлташ.

Сысна пăхакан София Московцева, Мария Семенова, Вера Иждерова, Федосия Толстова, Степанида Ермолаева юлташсем те паян çак тĕллевпех ĕçлеççĕ. Кăçалхи 8 уйăх хушшинче вĕсем кашни амаран 11 çура илнĕ. Фермăра çитĕнтернĕ çурасен пĕр пайне колхозниксене панă. Халĕ кашни колхозник хăйĕн хуçалăхĕнче сысна усрать.

Хальхи вăхăтра колхозри парторганизаци партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановление колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса пама тăрăшать.

В. ЧЕРНОВ.

Ишлей районĕ.

Шупашкар МТС-ĕнче ĕçлекен трактористсемпе комбайнерсем тата слесарьсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановление пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: МТС главнăй агрономĕ Г. Ф. Ярмуткин юлташ МТС-ра ĕçлекенсене КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕн постановленине вуласа парать.
Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Посольствинче пулнă йышăну

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче Демократиллĕ Корея Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Лим Хэ Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство Делегацийĕ ячĕпе йышăну туса ирттернĕ.

Йышăнура çаксем пулнă: СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов, КПСС Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш Секретарĕ Н. С. Хрущев, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ тата СССР Оборона Министрĕ Н. А. Булганин, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ Л. М. Каганович, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата СССР Шалти Суту-илӳ Министрĕ А. И. Микоян, СССР Министрĕсен Совечĕн Государство План Комитечĕн Председателĕ М. З. Сабуров, РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. П. Тарасов, РСФСР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ А. М. Пузанов, СССР Министрĕсем М. Г. Первухин, П. К. Пономаренко, С. М. Тихомиров, С. Н. Круглов, И. А. Бенедиктов, С. А. Акопов, П. А. Юдин, Н. А. Дыгай, П. Я. Антропов, Д. Ф. Устинов, З. А. Шашков, А. Ф. Третьяков, Совет Союзĕн Маршалĕсем А. М. Василевский, С. М. Буденный, СССР Наука Академийĕн Президенчĕ А. Н. Несмеянов, ССР Союзĕн Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи Посолĕ С. П. Суздалев, РСФСР Сутĕç Министрĕ И. А. Каиров, СССР Министрĕсен Заместителĕсем А. А. Громыко, С. А. Борисов, С. В. Кафтанов, В. А. Зорин, К. П. Коваль, В. А. Сергеев, В. Н. Столетов, Н. Н. Беспалов, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. М. Пегов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Коллеги Членĕ Л. Ф. Ильичев, Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолсем Н. В. Славин, Г. Т. Зайцев, Д. А. Жуков, ССР Союзĕн Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи Суту-илӳ Представителĕ П. И. Сакун, Мускав Совет Председателĕ М. А. Яснов, Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн Председателĕ Н. С. Тихонов, Авиаци Маршалĕсем П. Ф. Жигарев, С. Ф. Жаворонков, Арми Генералĕ М. С. Малинин, Адмиралсем Н. Е. Басистый, В. А. Фокин, Г. И. Левченко, Генерал-полковник Ф. Ф. Кузнецов, Мускав хулин Коменданчĕ Генерал-майор И. С. Колесников, общественноçпа пичет представителĕсем, наукăпа искусство деятелĕсем.

Корея енчен йышăнура Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Ким Ир Сен, Корейăри Ĕçлĕх Партийĕн Центральнăй Комитечĕн Председателĕн Заместителĕ Пак Ден Ай, Министрсен Кабинечĕн Председателĕн Заместителĕ Тен Ир Лен, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Нам Ир, Государство План Комиссийĕн Председателĕ Тен Дюн Тхяк, Чугун çулсен Министрĕ Ким Хэ Иль тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Посольствин членĕсем пулнă.

Йышăнура çавăн пекех Венгри Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ А. Складан, Китай Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Чжан Вэнь-тянь, Румыни Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. Даля, Польша Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ В. Левиковский, Чехословаки Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Я. Вошаглик, Монголи Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Д. Адилбиш, Албани Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. Прифти, Болгари Халăх Республикин Вăхăтлăх Повереннăйĕ В. Велков, Демократиллĕ Вьетнам Республикин Вăхăтлăх Повереннăйĕ Нгуэн Дык Куй, Демократиллĕ Германи Республикин Вăхăтлăх Повереннăйĕ К. Зейц пулнă. (ТАСС).

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство Делегацийĕ Мускавра пулни çинчен

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕн Председателĕ Ким Ир Сен ертсе пыракан Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство Делегацийĕ Мытищи МТС-ĕнче тата «Память Ильича» колхозра пулнă.

Министрсен Кабинечĕн Председателĕпе пĕрле çаксем пулнă: Корейăри Ĕçлен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Председатель Заместителĕ Пак Ден Ай, Министрсен Кабинечĕн председателĕн Заместителĕ Тен Ир Лен, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Нам Ир, Чугун çулсен Министрĕ Ким Хэ Иль, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Мускаври Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Лим Хэ тата ытти официальнăй çынсем. (ТАСС).

Районсенчи партконференцисем

КӲКЕÇ

Шупашкар районĕнчи парти организацийĕн VII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ.

КПСС Шупашкар райкомĕн отчетлă тапхăрти ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ М. В. Зайцев юлташ доклад туса парĕ.

КПСС XIX-мĕш съезчĕ кăтартнă задачăсене, КПСС обкомĕ «Шупашкар КПСС райкомĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановление, партин обласри XXIV-мĕш конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçласа, районти парти организацийĕ хуçалăхпа культурăлла строительствăна ертсе пырас ĕçре чылай çитĕнӳсем турĕ.

Партипе Правительство хуллен пулăшса пынипе район ялхуçалăхне аталантарас ĕçре чылай çитĕнӳсем пур. Суракине, тырă вырассине, вĕрхи тырă акассине районти колхозсем вăхăтра туса иртерчĕç. Малта пыракан Молотов ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан тата «Красный флот» колхозсем гектартан 16—20 центнер тĕштырă туса илеççĕ.

Анчах та,—тет докладчик,—районти ялхуçалăхĕ пая юлса пырать-ха, чылай артельсен хуçалăхĕсем питĕ вăрахăн юсанаççĕ. Районти колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç чăтма çук юлса пырать, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1952 çулхи плана пĕр выльăх енĕпе те тултарман. КПСС райкомĕ ялхуçалăх ĕçне çителĕксĕр ертсе пырать-ха.

Районти парторганизацисем халăх хушшинчи политикăлла-массăлла ĕçе ертсе пырассине лайăхлатнă, политикăлла-массăлла ĕçĕн идейăлла шайĕ ӳснĕ. Анчах ку ĕçре те пысăк ситменлĕхсем пур. Парторганизацисем политикăлла-массăлла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ-ха.

Политикăлла-массăлла ĕçе парторганизацисем кампанилле ертсе пыраççĕ. Агитколлективсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ленин ячĕпе, Фрунзе ячĕпе, Пушкин ячĕпе тăракан тата «Память Ленина» колхозсенчи парторганизацисен агитколлективĕсем уйăрмах япăх ĕçлеççĕ.

Гаврилов («Красный флот» колхозри парторганизаци секретарĕ), Петров («Красный волгарь» колхоз председателĕ), Егоров (Буденный ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ), Игнатьев (Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци секретарĕ), Хабаров (Чапаев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ) ялхуçалăхне аталантарас ĕçре районти машина-трактор станцийĕ, ялхуçалăх специалисчĕсем колхозсене çителĕксĕр пулăшса пынине кăтартса парчĕç.

— Пирĕн Чапаев ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем «СССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ 1953 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче йышăннă постановление радиопа итленĕ хыççăн колхоза çирĕплетессишĕн татах та тăрăшарах ĕçлеме пулчĕç,—тет Хабаров юлташ.—Пирĕн колхозри парторганизаци колхоза ертсе пырас ĕçе лайăхлатрĕ. Колхоза çулсеренех тырă тухăçлăхне ӳстерсе пырать. Пĕлтĕр пирĕн колхоз ыраш гектартан 8 центнер, тулă 4 центнер ытларах, çĕрулми 67 центнер çес туса илнĕ. Кăçал вара ыраш 19 центнер, тулă 20 центнер, çĕрулми 150 центнер туса илнĕ. Анчах пирĕн МТС япах ĕçлет-ха, колхозсем ĕçе пыракан требованисене тивĕçтерейместь.

Çавăн пекех районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕн участокĕнчи агрономĕсем, Ялхуçалăх министерствин работникĕсем çĕрĕс культурăна ӳстерес ĕçре колхоза çителĕклĕ пулăшу памаççĕ, вĕсем колхозсене е жалоба тĕрĕслеме, е тĕрлĕ сведенисем пухма çес пыраççĕ.

Артемьева юлташ (районти библиотека заведующийĕ) ялхуçалăх наукине пропагандăлас ĕçе районта çителĕксĕр йĕркеленине, парторганизацисем çак ĕçе йĕркелес ĕçре культурăпа сутĕç учреждениесене ертсе пыманнине кăтартса пачĕ.

Конференци пысăк активлăхпа иртрĕ, малашнехи задачăсене пурнăçламалли майсене палăртса, решени йышăнчĕ, парти райкомĕпе ревизи комиссине суйласа хăварчĕ.

* * *

Парти райкомĕн организацилле пленумĕ райком секретарĕсем пулма Зайцев, Воронов тата Антонов юлташсене суйларĕ.

МУРКАШ

Муркаш районĕнчи парторганизацин VII-мĕш конференцийĕ КПСС райкомĕн çулталăкри ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ Т. Логинов юлташ тунă доклада сӳтсе явре.

Докладчик районти парторганизацире партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсен шайĕ ӳснине палăртать. Пуçламăш парторганизацисен кĕрешӳри пултарулăхĕ чылай вăйланнă, коммунистсен ĕçри ответлăхĕ ӳснĕ, районти парторганизаци хуçалăхпа культура строительствин задачисене ăнăçлăрах туса пыракан пулнă.

Район иртнĕ çурави планне иртерсе тултарнă, пĕрчĕллĕ культурăсем акмалли задание 105,5 процент пурнăçланă. Кăçал государствăна тырă памалли плана район пĕлтĕрхинчен 15 кун маларах, августăн 30-мĕшĕнче тултарнă. Сталин ячĕпе тăракан, «Красное Сормово», Энгельс ячĕпе тăракан, «Знамя коммунизма» тата ытти хăшпĕр артельсем уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Асăннă колхозсем тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, авăн çапассине те лайăх йĕркеленĕ.

Докладчикпа прениre тухса каланă делегатсем районти парторганизацин ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри ситменлĕхĕсене палăртрĕç. КПСС райкомĕ ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăсене пурнăçлас ĕçе парторганизацисен вăйне кирлĕ таран мобилизацилемест. Райком юлса пыракан колхозсенчи парторганизацисене артель хуçалăхне вăйлатма пулăшас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет.

Колхозсене ертсе пыракан кадрсене суйласа лартас ĕçре парти райкомĕ чылай йăнăшсем тунă. Ленин ячĕпе тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем пулма хăйсене ĕçре палăртман, шанчăксăр çынсене лартнă пулнă. Çав колхозсенче вара председательсене тепрер хут улăштарма тивнĕ. Колхоз производствин уйрăм участокĕсене ертсе пыма кадрсем суйласа илес тата вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе те КПСС райкомĕпе пуçламăш парторганизацисен ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пур.

Тухса калакансем чылай колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне тĕрĕс пурнăçласа пыманнине палăртрĕç. Районта общественăлла çĕре, колхоз пурлăхне салатни çинчен калакан тĕслĕхсем нумай. Кăçал тĕрлĕ организацисемпе уйрăм çынсем колхозсем умĕнче 62.142 тенкĕ парăма кĕнĕ. Нумай колхозсенче транспорт инвентарĕпе кӳлмелли таврашсене уйрăм колхозниксем килĕсенче тытаççĕ.

Районти чылай колхозсем хуçалăх ĕçĕсемпе кая юлса пыраççĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне, районĕпе илсен, пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсенчен 64 процентне кăна çапса пуçтарнă. Вăрлăх фончĕсем хывас, çĕрулми кăларас тата ытти ĕçсем те юлса пыраççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе государство панă план тулса пымасть. Район уйрăмах ĕне тата чăх-чĕп ĕрчетмелли задание пурнăçлас тĕлĕшпе юлса пырать. Пуçламăш парторганизацисем выльăх-чĕрлĕх валли суртсем хатĕрлес ĕçе çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Нумай ялхуçалăх артелĕсенче выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçе паянхи куна та тивĕçлипе хаклаmаççĕ. Силос хывмалли плана районĕпе пурĕ те виçĕ колхоз кăна тултарнă.

Районта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, тырпул тухăçне хăпартас тĕлĕшпе пысăк ӳсĕмсем тунă колхозсем пур. Анчах та тивĕçлĕ организацисем вĕсен паха опытне ытти мĕнпур колхозсене çитермелле тăвассишĕн сахал тăрăшаççĕ.

— Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕнчи ответлă работниксем государствăна тырă памалли тапхăрта колхозсене час-часах пыратчĕç. Тырпул памалли плана тултарнă хыççăн райком секретарĕсем колхозсен малашлăхĕпе интересленме пăрахрĕç, халĕ ĕнтĕ вĕсене колхозсенче курма та çук,—терĕ «Свобода» колхоз председателĕ Яриков юлташ.

«Герой» колхоз председателĕ Бардасов, «Красное Сормово» колхоз председателĕ Моисеев, Калинин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Егоров юлташсем районти хуçалăха планлас ĕç кирлĕ пек пулса пымани çинчен каларĕç. Партипе Правительство ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе палăртнă задачăсем хуçалăха планлассине лайăхлатма хушаççĕ. Анчах та парти райкомĕ ку ыйту çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмасть.

Конференци парти райкомĕ уйрăмах социализмла ăмăртăва çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕ. «Районти канашлусемпе тĕрлĕрен пухусенче социализмла ăмăрту çинчен татти-сыпписĕр тепĕ пек шавлаççĕ. Тĕрĕссипе илсен вара, районĕпе 4—5 колхоз кăна ăмăртса ĕçлет, ытти колхозсем хушшинче ăмăрту йĕркелемен», тет «Красное Сормово» колхоз председателĕ Моисеев юлташ.

Делегат Беляев юлташ райкомăн ответлă работникĕсем коллективлăн ĕçлемелли принципа пăсни çинчен калать.

— Райком секретарĕ Логинов юлташ,—тет вăл,—бюро ларăвĕсене бюро членĕсем сахал пулнипех иртерет. Сапла вара бюрон хăшпĕр членĕсем бюро ларăвĕсенче мĕнле ыйтусем сӳтсе явнине пĕлмесĕр юлаççĕ. Кунсăр пуçне, райком ертсе пырас ĕçе уполномоченнăйсем урлă туса пыни те пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Парти райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Андреев юлташ КПСС обкомĕ районти парторганизацире идеологилле ĕçе лайăхлатма çителĕксĕр пулăшни çинчен, ку тĕлĕшпе райком ĕçĕнче пулнă çитменлĕхсем çинчен каларĕ.

Пренире пурĕ 22 çын тухса каларĕ. Вĕсем парти райкомĕн ертсе пырас ĕçне лайăхлатмалли майсене кăтартса пачĕç.

КПСС обком бюровĕн членĕ З. А. Андреева юлташ ялхуçалăхне хăватлăн аталантарас тĕлĕшпе районти парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

Пĕррелĕш организацилле пленумра КПСС райкомĕн секретарĕ пулма Т. Э. Логинов юлташа, райком секретарĕсем пулма Г. И. Ульянов тата И. Г. Мешаков юлташсене суйланă.

Пĕтĕм тĕнчери сирĕп миршĕн

Çак кунсенче Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн, мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн тата Чăваш республикинчи комитетăн пленумĕсен решенийĕсене сӳтсе явас тĕлĕшпе пухусем пулса иртеççĕ. Хулари ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, мире хӳтĕлес тĕлĕшпе йышăннă решенисене хĕрӳллĕн ырлаççĕ. Вĕсем тĕнчери хару-тăру аталанăвне тимлĕн сăнаса тăраççĕ, мире тĕреклетес тĕлĕшпе хăйсем мĕн тунă пултарнине пĕтĕмнех тăваççĕ. Тĕнчери тавлашуллă ыйтусене мирлĕн татса парассишĕн пыракан юхăма активлăн хутшăнса, мир политикине сирĕп тытса пыракан Коммунистсен партийĕпе Совет Правительствин тавра тачăрах пĕтĕçеççĕ.

* * *

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче Государство банкĕн республикăри кантурĕнче тата хулари уйрăмĕнче, çавăн пекех ялхуçалăх банкĕнче ĕçлекенсем Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ, мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн тата Чăваш республикинчи комитетăн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕсем йышăннă решенисене сӳтсе явма пуханнă.

Халăхсем миршĕн кĕрешни çинчен профсоюз комитечĕн председателĕ А. Щеглов юлташ доклад туса пачĕ. Вăл Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕн, мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн тата Чăваш республикинчи комитетăн пленумĕсен ĕçĕсемпе решенийĕсем çинчен тĕплĕн каласа парать.

— Мĕнпур çĕршывсенчи мирлĕ пурнăçа юратакан халăхсем,—тет докладчик,—нумайлăха пыракан çирĕп миршĕн, тĕнчери мĕнпур хирĕçӳсене калаçусем ирттернипе мирлĕн татса парассишĕн кĕрешеççĕ.

Докладчик Корейăра перемири тунине, çавăн пекех Берлинри провокаци путланса ларни миршĕн тăракансен пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăни çинчен калать.

— Совет Союзĕ мирлĕ пурнăçа юратнине,—тет вăл малалла,—унăн шалти политики, халăх пурнăçне вĕçĕмсĕр лайăхлатса пымалли политика уçăмлăн кăтартса парать.

Юлашкинчен докладчик çапла калать:

— Пысăк услам илессишĕн хыпăнакан империалистсемпе вĕсен агенчĕсем çĕç вăрçă пуçарса ярасшăн. Пире вăрçă кирлĕ мар. Çавăнпа та эпир хамăрăн сасăмăра миршĕн кĕрешекенсен сассипе пĕрлештеретпĕр, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин мире юратакан политикине чĕререн ырлатпăр тата тĕнчери ыйтусене мирлĕн татса парассишĕн пыракан юхăма хутшăнса, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăватпăр. Мир вăйĕ вăрçă вăйĕсене çĕнтерет!

Доклад хыççăн Государство банкĕн республикăри кантурĕн управляющи заместителĕ М. Налимов юлташ сăмах калать.

— Эпир,—тет вăл,—Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ государствăсем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене калаçусем иртернипе мирлĕн татса пама чĕнсе йышăннă решенисене чĕререн ырлатпăр. Эпир, совет çыннисем, вăрçăшăн мар, социализмла Тăван çĕршывăн—Пĕтĕм тĕнчери мир тĕрекĕ пулса тăракан Совет Союзĕн хăватне хамăрăн ĕçпе татах тĕреклетĕпĕр.

Государство банкĕн республикăри кантурĕн кадрсен пайĕн начальникĕ Е. Калиновская юлташ çапла калать:

— Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ, мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕн пленумĕ тата мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен республикăри комитетăн пленумĕ йышăннă решенисене эпир чĕререн саламлатпăр. Мир вăл хăй тĕллĕн килмест, мир пултăр тесе, кашни çыннăн харпăр хăй вырăнĕнче лайăхрах ĕçлемелле. Мир çĕнтерĕвĕшĕн, Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн эпир хамăрăн вăя шеллемесĕр ĕçлĕпĕр. Капитализмла çĕршывсенчи ĕçсыннисем, вăрçă расхочĕсене тата ĕçсĕрлĕхе пула, çав тери нуша кураççĕ. Çав вăхăтрах пирĕн çĕршывра ĕçсыннисен пурнăçĕ пĕрмай лайăхланса пырать, мĕншĕн тесен партипе правительство пирĕншĕн куллен тăрăшаççĕ. Пире вăрçă мар, мир кирлĕ. Эпир вăрçă чĕртекенсен каварне хирĕç хамăрăн сыхăлăха тата ытларах вăйлатăпăр. Хамăр умри задачăсене ăнăçлă пурнăçласа, Тăван çĕршыв тĕрекне ӳстерессишĕн тата тăрăшарах ĕçлĕпĕр.

Пухура тухса калакансем пурте пирĕн халăх мир политикине сирĕппĕн тытса пыракан Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăнине тепĕр хут кăтарса пачĕç.

Г. АНДРЕЕВ.

Ĕççыннисен сывлăхĕшĕн

Совет халăхĕ коммунизм тăвассишĕн ырми-канми ĕçлет. Коммунизм тума мирлĕ, лăпкă пурнăç кирлĕ. Çавăнпа та пирĕн халăх мир ĕçне хӳтĕлет, тĕнчери тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа, калаçусем иртернипе татса парассишĕн кĕрешет.

Совет Союзĕ мире юратни унăн шалти политикинчен лайăх курăнать, çав политика халăхăн пурнăçне кулленех лайăхлатмалли политика пулса тăрать.

Пирĕн çĕршыври чи хаклă капитал вăл—этем. Пирĕншĕн, халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекенсемшĕн, çыннăн сывлăхĕшĕн тăрăшасси — пирвайхи тивĕç.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ çапла кăтартса пачĕ: ĕççыннисене медицина пулăшăвĕ парас ĕçре вĕсене чир-чĕртен сыхланмалли майсем çинчен каласа парасси сывлăх органĕсен питĕ пысăк задачи пулса тăрать, терĕ.

Профилактика — санитари енĕпе ĕçлекен врачсен тата эпидемиологсен ĕçĕ кăна мар, сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур работниксен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать. Кунпа пĕрлех, халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе вырăнти Совет председателĕ те, учитель те, коммунальнăй хуçалăх, ялхуçалăх работникĕсем те, апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсем те—пурте ĕçлемелле.

Совет врачĕн ĕçĕ профилактикăлла ĕçсем тăвассипе тачă çыхăнса тăрать. Патша саманинче ĕççыннисен сывлăхĕшĕн тăрăшман, çак ĕçе совет саманинче çеç тивĕçлипе туса пыраççĕ. Пиншер совет çыннисен сывлăхне çулсерен тĕрĕслеççĕ, вĕсен сывлăхне сыхлаççĕ. Пирĕн ĕççыннисен сывлăхĕ çирĕп пулсан, Тăван çĕршывăн вăй-хăвачĕ те ӳссех пырĕ, ку вăл мир ĕçне тĕреклетме те пулăшĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕ совет учрежденийĕсенчи ĕç кунĕн йĕрки çинчен йышăннă постановлени те партипе правительство ĕççыннисен сывлăхĕшĕн тăрăшнине кăтартса парать.

Совет медицини, ун умне Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви лартнă задачăсене пурнăçласа, çынсен пурнăçне вăрăмлатассишĕн, вĕсен сывлăхне çирĕплетсе пырассишĕн кĕрешет.

Эпир, Чăваш республикинчи медицина работникĕсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес тесе хамăрăн вăй-хала хĕрхенмесĕр ĕçлĕпĕр, çĕршывăн санитари оборонине тĕреклетсех пырăпăр.

П. ОСИПОВ,
РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ, медицина наукисен кандидачĕ.

Районти хаçатсем пĕлтереççĕ

ТĂВАТТĂМĔШ КВАРТАЛШĂН

Апат-çимĕç комбиначĕ виççĕмĕш квартални производство планне тултарчĕ. Халĕ комбинат тăваттăмĕш квартал шутĕпе ĕçлет.

Кашни рабочи лайăх продукци туса кăларассишĕн кĕрешет. Ульяна Федорова мастер кварталти плана 157 процент тултарнă. Пахча-çимĕç типĕтекен цехри рабочисем те кварталти плана пурнăçларĕç.

«СТАЛИН ÇУЛĔПЕ».

Калинино.

ПУСАНА МАШИНĂПА ТЫЛЛАТПĂР

«Заветы Ильича» колхоз членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата лайăх туса пыма тăрăшаççĕ. Уй-хир бригадисем кĕркке вăхăт хушшинче пуса татса пĕтерчĕç, шыва хутса кăларчĕç.

Кăçал колхоз кантăр тылламалли машина туянчĕ. Часах çак машинăпа пуса тыллама пуçлаççĕ.

«ОКТЯБРЬ ЯЛАВĔ».

Комсомольски.

ГОСУДАРСТВĂНА ЙĔТĔН ПАРАÇÇĔ

Маленков ячĕпе тăракан колхоз кăçал 23 гектар йĕтĕн акнă. МТС пулăшнипе йĕтĕне лайăх пухса кĕртнĕ. Çак кунсенче государствăна виçĕ тонна паха йĕтĕн панă. Колхоз 10 тонна йĕтĕн вăрри çапса илнĕ.

Государствăна йĕтĕн памалли задание 400—500 процент пурнăçласа, колхоз 100 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă.

«КОММУНИСТ».

Етĕрне.

АВАНС ШУЧĔПЕ ТЫРĂ ИЛЕÇÇĔ

«Красное Сормово» ялхуçалăх артелĕ государствăна срокчен тырă парса татрĕ. Тăван çĕршыв умĕнчи пирвайхи тивĕçе пурнăçланă хыççăн, колхозниксене аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ çине 1,5-шер килограмм тырă валеçсе пачĕç. Нумай колхозниксем 40—60-шар пăт тырă илчĕç.

«КОЛХОЗНИК САССИ».

Муркаш.

Ялхуçалăх специалисчĕсем вĕрентсе хатĕрлекен шкулта

Республикăри колхоз председателĕсем хатĕрлекен вăтам шкултан çулсеренех вуншар специалист вĕренсе тухать.

Кăçал та ку шкулта нумай çын вĕренет. Вĕсем агробиологи наукине, колхоз производствин организацине, зоотехникăна тата ытти предметсене тĕплĕн вĕренме тăрăшаççĕ.

Хальхи вăхăтра шкулта хĕрӳллĕ тапхăр. Пĕррремĕшпе иккĕмĕш курссенче вĕренекенсем пĕр курсран тепĕр курса куçмалли экзаменсем тытаççĕ. Малтанхи результатсем çакна кăтартаççĕ: вĕренекенсем çирĕп пĕлӳ илнĕ, теорилле пĕлĕвĕсене практикăпа сыхăнтарма пĕлеççĕ.

Виççĕмĕш курсра 49 çын вĕренет. Вĕсем хушшинче колхоз председателĕсемпе уй-хир бригадин бригадирĕсем тата выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем пур. Виçĕ çул хушшинче вĕсем хăйсен пĕлĕвне чылай ӳстернĕ. Октябрь уйăхĕн пуçламăшĕнче çак курсра вĕренекенсем государство экзаменĕсем тытаççĕ. Çамрăк специалистсем пурте колхозсене ĕçлеме каяççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕррремĕш курсра вĕренме 60 çын илмелле. Халĕ вĕсем экзамен тытаççĕ. Шкул çумĕнче колхоз председателĕсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлекен пĕр çуллăх курс пур. Курсра вĕренме кăçал çĕнĕрен 30 çын илме палăртнă. Занятисем ноябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

«КАМА КАМ УЛТАЛАТЬ»

Ĕççынни депутачĕсен Çĕрпӳ район Совет исполкомĕн ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра августăн 26-мĕшĕнче пичетленнĕ «Кама кам улталать?» ятлă фельетона район Совет исполкомĕн ларăвĕнче сӳтсе явни çинчен пĕлтерчĕ. Район Совечĕн исполкомĕ фельетонра кăтартнă фактсем тĕрĕс тесе йышăннă. «Сталинцы» колхоз председательне Сергеев юлташа комбайн ĕçлевĕ участоксене йышăннă чухне тунă йăнăшсене тӳрлетме хушнă.

МТС директорне трактор бригадин бригадирне Степанов юлташа администраци енĕпе ответ тыттарма хушнă.

Т. С. Степанов юлташа парти енĕпе ответ тыттарнă.

«ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕССИ ÇИНЧЕН АНЛĂН ÇУТАТМАЛЛА»

КПСС Йĕпреç райкомĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра августăн 18-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен анлăн çутатмалла» ятлă статьяра «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçатăн ситменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса пани, хаçат ĕçне лайăхлатасси çинчен парти райкомĕн бюровĕнче сӳтсе явни çинчен пĕлтерчĕ.

Парти райкомĕн бюровĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен районти «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçатра анлăрах çутатмалла тесе решени йышăннă.

«КУЛАТОВ СИСТЕМИНЧИ ЧĂПТА ИСТОРИЙĔ»

Августăн 22-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Кулатов системинчи чăпта историйĕ» ятлă фельетон пичетленсе тухнăччĕ. Ишлей районĕн прокурорĕ фельетонра кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни, кооператци пурлăхне çаратса айăпа кĕнĕ Калинина, Прохорова тата ыттисене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла туни çинчен пĕлтерчĕ.

Коммунизмшăн хĕрӳллĕн кĕрешнĕ паттăрсем

Бакури 26 комиссара персе пăрахнăранпа 35 çул тултарнă тĕле

Акгли интервенчĕсем Бакури 26 комиссара персе пăрахнăранпа паян 35 çул тултарать. 35 çул каялла—1918 çулхи сентябрĕн 20-мĕшĕнче Красноводск хулинчен 207-мĕш çухрăмра, Ахча-Куйма тата Перевал станцийĕсем хушшинче, Бакури коммунистсен руководителĕсене, революцишĕн кĕрешекен паттăрсене, Бакури совет влаçĕн организаторĕсемпе руководителĕсене—Бакури 26 комиссара персе пăрахнă. Çак юнлă ĕçе Англи командованийĕн представителĕ Тиг Джонс капитан тата белогвардеецсен Каспий тинĕсĕн леш енчи «правительство» членĕсем — Англи империализмĕн эсерла лакейĕсем ертсе пынă.

Интервентсен аллинчен Степан Шаумян, Алеша Джапаридзе, Мешади Азизбеков, Иван Фиолетов, Павел Зевин, Григорий Корганов, Иван Малыгин, Г. Петров, Арсен Амирян тата ыттисем те вилнĕ. Хăйсен пурнăçне ĕççыннисен ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн, марксизм-ленинизмăн аслă идейисен çĕнтерĕвĕшĕн панă çак çулăмлă революционерсен ячĕсене пирĕн партин коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пынă кĕрешӳĕн геройла летописне мăтăн саспаллисемпе çырса хунă.

* * *

1918 çул çамрăк Совет Республикишĕн йывăр тĕрĕслӳ çулĕ пулнă. Империалистсен хăйсен агентури — çĕршыври контрреволюцилле вăйсем—пулăшнипе Совет Российăне хирĕç, ăна пайласа пĕтерес тата хăйсен колонийĕ туса хурас тесе тăрăшса вăрçăллă интервенци пуçласа янă. Кавказ леш енче, ют çĕршыв интервенчĕсен çарĕсем çине таянса тăракан меньшевиксем, эсерсем, буржуаллă националистсен хуçаланса пурăннă вырăнта, уйрăмах йывăр хару-тăру пулса тăнă. Империалистла тискер вăйăсем — Англи тата Германипе Турци вăрă-хурахĕсем Баку çине—Российăн промышленноçĕ пысăк центрĕ çине хăйсен выçă куçĕпе пăхса тăнă.

Баку хулинчи рабочисем — çĕршыври рабочи класăн малта пыракан отрячĕсенчен пĕри пулса тăракан, самодержавипе капитализма хирĕç пынă революцилле çапăçусенче пиçĕхнĕ рабочисем — Кавказ леш енче пуринчен малтан совет влаçĕ туса хунă. Совет влаçне тĕреклетессишĕн, пĕтĕм Азербайджанра совет влаçĕ туса хурассишĕн пыракан Бакури рабочисен кĕрешĕвне большевиксем ертсе пынă. Муссаватистсен контрреволюцилле бандине — шултра буржуазипе помещиксен тата реакцилле тĕн çыннисен националистла партине — çĕмĕрсе тăкнă хыççăн Баку пролетариачĕ влаçа алăра çирĕп тытса тăнă. Бакура Халăх Комиссарĕсен Совечĕ туса хунă. Халăх Комиссарĕсен Советне кĕрешӳре тĕрĕсленнĕ коммунистсем С. Шаумян, А. Джапаридзе, М. Азизбеков, И. Фиолетов, Г. Корганов, Я. Зевин, М. Везиров тата ыттисем те кĕнĕ. Совнаркома тĕрлĕ национальноçсен çыннисем кĕнĕ. Çакă вăл Кавказ леш енчи халăхсен тăванла туслăхне палăртса тăнă.

Совнарком организаторла ĕçе активлăн вăйлатса пынă. Çавна пула Азербайджанри ытти чылай хуласенче тата Дагестанри хуласенче те — Дербентпа Махачкалара — совет влаçĕ туса хунă. Бакури коммунистсем Баку хулинчен совет влаçĕн Кавказ леш енчи çирĕп тĕревĕ туса хунă.

Бакури Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Ленинпа Сталин çул кăтартса ертсе пынă, вĕсем Кавказ леш енче ĕçсем мĕнле аталанса пынине тимлĕн сăнаса тăнă.

Партин Центральнăй Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, Бакури коммунистсем социализмла пысăк улшăнусем туса иртернĕ. Совнарком нефть промышленноçне, Каспий тинĕсĕ çинчи суту-илӳ флотне, банксене национализациленĕ, кивĕ суда пĕтернĕ, çĕнĕ, халăх сучĕ туса хунă, бексемпе хансен çĕрĕсене ĕç хресчĕнĕсене пама конфискацилесси çинчен декрет кăларнă, предприятисенче 8 сехетлĕ ĕç кунĕ туса хунă. Çаксене пурнăçа кĕртес ĕçре Баку пролетариатне Совет Российи пысăк пулăшу панă. Ку вăхăтра Совет Российин хăйĕн те пысăк йывăрлăхсем тӳссе иртермелле пулнă. Бакури рабочисем те хăйсен енчен РСФСР-а пулăшнă, вĕсем ăна 80 миллион пăт ытла нефть тата бензин ярса панă.

Баку пролетариачĕ, Кавказ леш енчи пролетариатшăн, И. В. Сталин каланă тăрăх, «хавхалантаракан тĕслĕх тата социализм патне пымалли çула çутатса тăракан чĕрĕ маяк» пулса тăнă. Çакă вăл империалистсене тата вĕсен çĕршыври контрреволюцилле вăйĕсене питех те сехĕрлентерсе тăнă, вĕсем совет влаçĕн Кавказ леш енчи тĕрекне хирĕç наступлени пуçлассине хăвăртлатма тăрăшнă.

1918 çулхи июль уйăхĕнче муссаватистсен бандисем, Германи тата Турци çарĕсемпе пĕрлешсе, Баку çине тапăнса пынă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Ирана çирĕп вырнаçнă Англи империалисчĕсем интервенци пуçланă. Вĕсем советлă Бакуна Иранран тапăнма хатĕрленнĕ. Хулара дашнаксем, эсерсем, меньшевиксем хăйсен сăтăрла ĕçĕсене вăйлатнă. Вĕсем Баку хулине, хулана Германипе Турцин хĕçпăшаллă вăйĕсем туртса илесрен сыхласа хăварма тесе, Англин интервенционистла çарĕсене чĕнсе илессишĕн агитаци сарнă. Баку Совечĕн ларăвĕнче çак ыйтăва сӳтсе явнă чухне эсерсемпе меньшевиксем Советăн ытларахăшне хăйсен енне çавăрма пултарнă. Баку хулине Англи çарĕсене чĕнсе илме решени йышăнтарнă.

Германипе Турци тата Англи империалисчĕсем тата вĕсен эсерла-меньшевикла, муссаватистла агенчĕсем тапăнса кĕнипе Бакура совет влаçне пĕтерсе лартнă пулнă. Баку пролетариачĕн руководителĕсене — Бакури 26 комиссара—меньшевикла-эсерла контрреволюцилле правительство арестлет. Çак правительствăна Бакура «Центрокаспий диктатури» тенĕскерĕ туса хунă. Англи империалисчĕсене Баку хулине вăл чĕнсе илнĕ ĕнтĕ.

Белогвардеецсем Баку комиссарĕсене вĕлерме ĕлкĕреймен, вĕсен хăйсен Бакуран тухса тармалла пулнă, мĕншĕн тесен Баку хулине Германипе Турци çарĕсем тата муссаватистсен бандисем йышăннă. Баку комиссарĕсем тĕрмерен тарса тухнă. Анчах вĕсем Астрахане кайма ларса тухнă пăрахута, сутăнчăкла ĕçсене пула, Красноводск хулине илсе пынă. Ку вăхăтра унта Англи империалисчĕсен службинче тăракан Каспий леш енчи эсерла правительство пуç пулса тăнă.

1918 çулхи сентябрĕн 20-мĕшĕнче тул çутăлас умĕн Англи интервенчĕсем хăйсен тарçисемпе-эсерсемпе пĕрле Бакури 26 комиссара вĕлернĕ. Çак тискер ĕç вăл Англи империалисчĕсен чи ирсĕр ĕçĕсенчен пĕри пулнă. Рабочи класс тата тепĕр хут çакна курса ĕненнĕ: «ырă кăмăллă» тата «цивилизацилле» Англи интервенчĕсем, чăннипе илсен, хăйсен саратуллă тĕллевĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе нимĕн умĕнче те чарăнса тăман тискер кайăксем пулса тăраççĕ.

Англипе Америка тата ытти çĕршывсен империалисчĕсем колонисенче тата пăхăнса тăракан çĕршывсенче тата демократилле вăйсене хирĕç кĕрешнĕ чухне халĕ те çынсене массăллăн вĕлереççĕ, çар сучĕсемпе усă кураççĕ, тĕрлĕ халăх çыннисем хушшинче хирĕçӳсем кăлараççĕ тата ытти тискер ĕçсем тăваççĕ. Сакăн çинчен Англи колонизаторĕсем Кенири ĕççыннисене массăллăн вĕлерсе пĕтерни, Франци монополисчĕсем Вьетнамра вăрçă вăрçни, Америка çар çыннисем Корейăра халиччен пулман тискер ĕçсем туни тата ыттисем те лайăх кăтартса пâраççĕ.

Бакури 26 комиссара вĕлернĕренпе 5 çул тултарнă кун 1923 çулта партин Центральнăй Комитечĕ Азербайджанри ĕççыннисем патне янă çырура çапла çырнă: «... Хăйсен пуçне хунă юлташсем валли лартакан чи лайăх памятник вăл,—вĕсен революцилле тава тивĕçлĕ ĕçĕ Бакури рабочисен чĕринче юлнă ĕнтĕ,—эсир çине тăрса, хресченсемпе тачă союз тытса, вăл союза кашни кун тĕреклетсе пынипе тунă Советлă Азербайджан Республики пулса тăрать. РКП Центральнăй Комитечĕ эсир малашне те хăйсен пуçне хунă 26 юлташ халаласа хăварнă революцилле аслă героизма малалла илсе пыма тивĕçлĕ пуласса тата Азербайджан советлă республикинчен Хĕвелтухăçĕнче пулас советлă республикăсемшĕн тĕслĕх туса хума пултарасса шанса тăрать».

Бакури 26 коммуниста тискеррĕн вĕлернĕренпе иртнĕ 35 çул хушшинче Коммунистсен партийĕн ленинла-сталинла наци политикине тĕрĕс пурнăçласа пынипе Азербайджан хăватлă индустриллĕ, малта пыракан механизацилле ялхуçалăхлĕ, форма тĕлĕшĕнчен нацилле, содержани тĕлĕшĕнчен социализмла культура вăйлăн аталаннă, чечекленекен совет республики пулса тăчĕ. Азербайджан ССР-ĕ Хĕвелтухăçĕнче чăннипех социализм маякĕ пулса тăчĕ. Республикăри ĕççыннисем Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе КПСС XIX-мĕш съезчĕ палăртса панă коммунизм строительствин программине ăнăçлăн пурнăçлаççĕ.

Азербайджан ССР-ĕн экономикипе культурин мĕнпур отраслĕсем аталанса пынинче, унăн халăхĕн телейлĕ пурнăçĕнче, коммунизм тăвакан совет çыннисен историллĕ çĕнтерĕвĕсенче марксизм-ленинизмăн аслă идейисен çĕнтерĕвĕ палăрса тăрать. Çавăншăн Бакури 26 комиссар паттăррăн кĕрешнĕ, хăйсен пурнăçне панă. (ТАСС).

Продукци пахалăхĕшĕн кĕрешни—халăх ырлăхĕшĕн тăрăшни

Çак кунсенче Шупашкарти чăлха фабрикинче ĕçлекенсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва хатĕрленсе, рабочисем фабрика сакăр уйăх хушшинче мĕнле ĕçленине тишкерсе тухнă, продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе малашне мĕн-мĕн тумалли çинчен пĕр-пĕринпе канашланă.

Пуху йĕркинчи ыйтăва пуху активлăн сÿтсе явнă. Доклад тăрăх прение 12 çын тухса каларĕ. Вĕсем чăлхасемпе носкисен пахалăхне лайăхлатас, производство планне пур енĕпе те тултарса пырас енĕпе усăллă канашсем пачĕç.

Çак страницăра эпир фабрикăри пĕрлехи пуху çинчен каласа паратпăр.

Шалти резервсемпе туллин усă курассишĕн

Фабрика директорĕ **А. Петрунин** юлташ хăйĕн докладĕнче коллектив сакăр уйăхри производство планне мĕнле пурнăçлани çинчен тата СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

— Пирĕн фабрика коллективĕ,—тет докладчик,—СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн сăмахне тата СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисене пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕ. Çав историллĕ документсем пире, совет çыннисене, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх ырлăхĕшĕн питĕ тимлĕн тăрăшнине тепĕр хут кăтартса парĕç.

Совет халăхĕн куллен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерес ĕçре çăмăл промышленность предприятийĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир хамăрăн маларахри ÿсĕмсемпе лăпланса ларма пултараймастпăр, пирĕн уйрăмах продукци пахалăхне лайăхлатма тăрăшас пулать. Çак пухура пирĕн нимрен ытла ĕçри çитменлĕхсем çинчен каласмалла, çав çитменлĕхсен сăлтавĕсене тупса палăртмалла. Фабрика ĕçĕнчи çитменлĕхсене хамăрсăр пусне никам та пĕтерес çук.

Тÿрех калималла, кăçал эпир ку таранччен хамăрăн задачăсене тивĕçлипе пурнăçласа пыраймарăмăр: Сакăр уйăхри производство планне фабрика тултарса çитереймерĕ. Çакăншăн никам та мар, хамăрах айăплă. Оборудованипе туллин усă курманни тĕрлĕ сăлтавсенчен килнĕ. Ĕçленĕ чухне оборудованине тивĕçлипе асăрхаса тăмастпăр. Смена улшăннă вăхăтра мастер помощникĕсем станоксене тĕрĕслесе йышăнмаççĕ. Ку вара техникăпа усă курас ĕçре обезличка патне илсе пырать.

Пирĕн пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме май паракан станоксем пур. Сăмахран, икĕ системăлла автоматсем, пĕр системăллипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхне икĕ хут ÿстерме май параççĕ. Анчах эпир вĕсемпе туллин усă курма вĕренсе çитеймен-ха. Çав автоматсемпе лайăх ĕçлеме хăнăхса çитмен пирки, министерство урлă ятарласа мастер чĕнсе илме тиврĕ. Техникăпа усă курассине пирĕн малашне тĕпренех лайăхлатмалла пулать.

Халĕ фабрика, 1946 çулхипе танлаштарсан, продукци тăватă хут ытларах туса кăларнине эсир пурте пĕлетĕр. Анчах ĕç продукци ытларах туса кăларнинче кăна мар. Унăн ассортиментне нумайлатмалла, пахалăхне пĕрмаях лайăхлатса пымалла,—çакăн пек пирĕн умра тăракан задача.

Мĕнле кĕрешнĕ-ха эпир продукци пахалăхĕшĕн? Пĕрремĕш сорт продукци туса кăлармалли плана фабрика ирттерсе тултарса пырать. Анчах ку вăл ĕçре çитменлĕхсем суккине пĕлтермест. Çуркуннепе çулла суту-илÿ организацийĕсем йăрăмлатса е шуратса илемлетнĕ носкисем нумай ыйтатчĕç. Çавăн йышши продукцие ытларах туса кăларма май пулнă. Апла пулин те, ку енĕпе эпир хамăрăн майсемпе туллин усă курайман. Ку вара ĕççыннисем мĕн ыйтнине кирлĕ пек тивĕçтерме тăрăшманнине пĕлтерет. Таса мар продукци час-часах тĕл пулать, вара ăна тепĕр хут сăрлама тивет. Хăшпĕр чухне чăлхасемпе носкисене сÿтсе тепĕр хут çыхма тивет, çакă вара чĕртавар ытлашши расходласси патне илсе пырать.

Продукци лайăх пахалăхлă пулмасни, чĕртавар ытлашши расходлани, экономикăпа техника тĕлĕшĕнчи кăтартусене пурнăçламанни пирĕн хăшпĕр работниксем хăйсен тивĕçĕсене манни, фабрика чысĕшĕн кирлĕ пек кĕрешменни çинчен калать. Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн пыракан кĕрешÿре çитменлĕхсем пулсан, вĕсене тупса палăртса, сăлтавĕсене пĕтерсе пырас пулать. Эпир ку енĕпе тивĕçлипе ĕçлемен, рабочисемпе мастерсен тата вĕсен помощникĕсен, фабрикăри пайсен ответлăхне ÿстерме тăрăшмаç, технологи процесне пăснисемпе ку таранччен килĕшсе пурăннă. Производство технологине, техникăлла условисене пăснисем нумай пулнă. Ку вăл продукци пахалăхне чакарнă.

Ахальтен мар ĕнтĕ фабрика туса кăларнă продукцие суту-илÿ организацийĕсем юрăхсăр тесе хак панă тĕслĕхсем те пулнă. Сăмахран, Калинин хулинче 257 тенкĕлĕх продукцие пĕрремĕш сортран иккĕмĕш тата виççĕмĕш сортсене куçарнă. Мĕнле пулнă-ха? Контролерсем продукцие тĕрĕс мар сортланă. Чăлхасене мăшăрăн-мăшăрăн суйланă чухне йăнăш тунă. Хусанта 10.836 тенкĕлĕх продукцие пĕрремĕш сортран иккĕмĕш сорта куçарнă. Продукци таса мар, çĕвĕсем тирпейсĕр пулнă.

Çак çитменлĕхсем кашни работницăна, уйрăмах мастер помощникĕсене тарăн шухăша ямалла.

Машинăсенче çип вĕçĕсене касма ятарласа хачăсем пур. Вĕсенчен нумайăшĕ юсавлă мар, мастер помощникĕсем вара çав çитменлĕхе пĕтерме тăрăшмаççĕ. Чăлха çинче çип вĕçĕсем пулнине пирĕнтен хăшпĕрисем çитменлĕх вырăннe шутламаççĕ. Час-часах чăлхасен тăршшĕ пĕр пек пулмасть. Машина çинчен илнĕ хыççăн чăлха тăршшĕне виçсе пĕлме йывăр мар ĕнтĕ. Мастер помощникĕсенчен хăшпĕрисем темшĕн çавна тума ÿркенеççĕ вара. Оборудованипе ытлашши çу сĕрнĕ пирки чăлхасем час-часах таса мар пулаççĕ.

Сичĕ уйăх хушшинче тупăш тумалли плана фабрика тултараймарĕ. Фабрикăн оборотри укçа-тенки çителĕклĕ мар. Финанс ĕçĕсем çителĕксĕр пулса пыни производство планне тултарайманнинчен килнĕ. Çавăнпа та малашне кашни работницăн нормăна тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешмелле.

Фабрикăра хăйсен пĕтĕм вăйĕсене хурса ĕçлекенсем сахал мар. 8 уйăх хушшинче çулталăкри нормăна тултарнă стахановецсем пур. Вĕсем хушшинче — Е. Вулих, А. Шуверова, Е. Королева, Л. Аврова тата ытти те. Нумайăшĕсем çулталăкри нормăна çывăх вăхăтра тултарса çитереççĕ.

Çакăнпа пĕрлех нормăна тултарайманнисем пуррине те палăртмалла. Пĕр пек условисенче ĕçлеççĕ пулин те, хăшпĕр работницăсем нормăсене уйăхран уйăха тултараймаççĕ. Акă, Н. Чечневăна, А. Вечеркина сортировщицăсем нормăна пĕр уйăхра та тултарайман. Ун пеккисем фабрикăра 25 çынтан та иртеççĕ. Куншăн работницăсем хăйсем те, тата хамăр та айăплă. Юлса пыракансене стахановецсен опычĕпе паллаштарас ĕçе йĕркелеменни пирĕн ĕçри пысăк çитменлĕхсенчен пĕри пулать.

Пирĕн коллективăн малашне продукци ытларах туса кăларассишĕн, унăн пахалăхне лайăхлатассишĕн, иртнĕ уйăхсенче пулнă пăрăма татассишĕн çине тăрса ĕçлемелле. Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн пыракан кĕрешĕве мĕнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене хутшăнтармалла.

Продукци пахалăхне тĕрĕслессине лайăхлатмалла

Прение чи малтан чăлхасене сăрласа кăларакан цехри стахановка **Л. Аврова** сăмах илчĕ.

— Техникăлла тĕрĕслÿ пайĕ пирки фабрика директорĕ тĕрĕс каларĕ. Ку пай ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермесĕр продукци пахалăхне лайăхлатма çук. Брака пĕтерес майпа, кирлĕ пулсан, ку пая производствăна чарса лартма право панă. Калас пулать, техникăлла тĕрĕслÿ пайĕ çав правăпа усă курмасть, унтан та ытларах, продукци пахалăхне куллен кирлĕ пек тĕрĕслемест.

Пĕтĕм продукцие государство стандарчĕсемпе тата техникăлла условисемпе килĕшÿллĕн туса кăларас пулать. Пĕр-пĕр çитменлĕх пулсан та, продукцие производствăран кăларма юрамасть. Анчах çакна пирĕнтен хăшпĕрисем çаплах ăнланса илеймен-ха. Пирĕн цеха çурма фабрикатсем чăлха çыхакан цехран килеççĕ. Асăннă цех паракан чăлхасемпе носкисенче час-часах куçа курăнакан çитменлĕхсем пулаççĕ. Продукци таса мар, чăлхасене тепĕр хут пÿклеме каялла тавăрса пама тивет. Шурă чăлхасен çинче çулланса пĕтнĕ вырăнсем пулни пире питĕ кÿрентерет. Пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш сорт чăлхасемпе носкисем памалла пулсан, пиллĕкмĕш сорт продукци панă тĕслĕхсем те пулнă. Ку вăл брака хирĕç кĕрешнине пĕлтерет-и вара? Паллах, çук. Çав çитменлĕхсене çийĕнчех курса, тÿрлетме май çук-ши вара? Паллах, техникăлла тĕрĕслÿ пайĕ çийĕнчех асăрхасан, çавнашкал çитменлĕхсем пулман пулĕччĕç. Çавăнпа та эпир çав пай начальникĕнчен Новикова юлташран продукци пахалăхне тĕрĕслессине тĕпрен лайăхлатма ыйтатпăр.

Эпĕ çулталăкри нормăна сакăр уйăх хушшинче ирттерсе тултартăм. Çулталăк вĕçлениччен нормăран ирттерсе тата нумай продукци пама пулатăп. Анчах мана та, çулталăкри нормăна ирттерсе тултарнă ытти юлташсене те, фабрикăра юлса пыракан работницăсем пурри пăшăрхантарать. Ĕçлессе эпир пĕр пек условисенче ĕçлетпĕр. Никама та ыттисенчен лайăхрах условисем туса паман. Юлса пыракан работницăсене малта пыракансен опычĕпе паллаштарни пысăк усă пама пултарать. Анчах ку ĕçе фабрикăра йĕркелемен.

Пирĕн фабрикăра тĕп цехсем иккĕ. Вĕсем хушшинчи туслăха çирĕплетни продукци пахалăхне лайăхлатма чылай пулăшнă пулĕччĕ. Халĕ эпир час-часах пĕр-пĕрин продукцине тиркетпĕр, ĕçе лайăхлатма кирли çинчен калаçатпăр. Калаçни кăна çителĕксĕр. Фабрика умне лартнă задачăна пурнăçлассишĕн кашни работница ответлă. Малашне çак ответлăха ÿстерни кирлĕ.

Шупашкарти чăлха фабрикинчи рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пухăвĕнче. Пухура сăмах калакан (сулахайри)—стахановка **Лидия Петрова**.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Пирĕн пысăк тивĕç

Сăмах **М. Каменецкий** мастера параççĕ.

— Кашни совет çынни,—тет оратор,—ĕç тухăçлăхне ÿстерме тăрăшать. Эпир пурте çакна лайăх пĕлсе тăратпăр: пирĕн предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ пысăк пулнинчен, продукцин хăйне ларакан хакĕ чакнинчен апат-çимĕç продукчĕсемпе таварсен хакĕ йÿнелесси, çапла вара, пĕтĕм халăх пурнăçĕ лайăхланасси килет.

Фабрика ĕçĕнче çитĕнÿсемпе пĕрлех пысăк çитменлĕхсем те пур. Ĕç тухăçлăхĕ кирлĕ пек ÿсмест, оборудованипе туллин усă курмастпăр. Çакăн пирки кашни работницăн тĕплĕн шухăшласа пăхас пулать. Фабрикăра çĕнĕ оборудовани пур çинчех, плана тултарма лайăх майсем пур çинчех эпир нумай кăтартусем енĕпе мĕншĕн кая юлнă? Çак ыйту кашниех хумхантарма тивĕç. Хумхантарни кăна мар, кашнин хăйне валли тивĕçлĕ выводсем туни кирлĕ.

Кунта нумайăшĕ доклад çумне хушса çĕнĕ тĕслĕхсем илсе кăтартрĕç. Коллектив хăйĕн задачине ăнланни курăнать. Çав вăхăтрах коллективра юлхавланса, малта пыракансен хÿттинче пытанма юратакансем пурри питĕ кÿрентерет.

Пирĕн хушăра хăйсене питĕ канлĕ туякансем, сехет йĕпписем шуса пынине кăна сăнаса тăракансем пур-ха, ун пирки тума кирлĕ мар. Пухура чăлха çыхакан цехра чылай çитменлĕхсем пурри палăрчĕ. Ку цех пирĕн фабрикăра тĕп вырăн йышăнса тăни сире пурне те паллă. Паллах, эпĕ кунта пурне те хурласшăн мар, лайăх ĕçлекенсем унта сахал мар. Анчах вĕсен тепĕр чух ĕçлес кăмăлĕ пусăрăнать. Мĕншĕн? Мастерсемпе вĕсен помощникĕсем пирки!

Сасă: Ку питĕ тĕрĕс!

— Тĕрĕс çав. Сăмахран, станок чарăнса ларчĕ, ĕçлеми пулчĕ. Сăлтавне хăвăртрах пĕлсе, станока юсамалла та ĕçе ямалла. Анчах работницăсен мастерсене тупма пÿлĕмрен пÿлĕме чупса çÿреме тивет. Мастерпа унăн помощникĕн вырăнĕ цехра пулмалла!

Ку çеç те мар. Юсавлă станоксене те тĕп-тĕрĕс ĕçлеттерни çук. Техникăна упрама тăрăшмастпăр эпир, юлташсем.

Снабжени пайĕ производство нушисене тивĕçтерме тăрăшмасть. Станоксемпе ĕçлеме тепĕр чухне йĕпсем çитмеççĕ, çакă сара снабжени пайне питех хумхантармасть пулас-ха.

Социализмла ăмăрту организацилес тĕлĕшпе палăртнă çитменлĕхсене пурне те тĕрĕс тесе шутлатăп эпĕ. Фабрикăра ăмăрту сарăлнă, анчах ăмăрту итогĕсем çинчен пĕлтерессине тата малта пыракансен опытне сарас ĕçе йĕркелемен.

Фабрикăн главнăй инженерĕ **А. Иванова** юлташ сăмах илет. Вăл продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк майсем пуррине палăртать. Пĕрремĕш сорт продукци туса кăлармалли плана тултарса пынă пулин те, ку вăл малашне çав çитĕнÿсемпе лăпланса лармаллине пĕлтермест, тет вăл.

— Продукци пахалăхне лайăхлатма чăрмантаракан çитменлĕхсем çинчен эпир тахçантанпах калаçатпăр. Продукци таса марри, çĕвĕсем ытла та килĕшÿсĕр пулни камсенчен килет-ха? Ку вăл чăлха çыхакансенчен хăйсенчен килет. Вĕсенчен хăшпĕрисем хăйсен ĕçне типтерлĕ те илемлĕ тума тăрăшмаççĕ, вĕсем юлхавланса ĕçленĕ пирки пĕтĕм коллективăн кÿренме тивет. Кашнин ĕçри ответлăхне ÿстерме кирли çинчен кунта тĕрĕс каларĕç. Малашне пурте хамăрăн ответлăха туллин туйса ĕçлеме тытăнсан, çитменлĕхсене пĕтерме пулатех ĕнтĕ.

Чăлхасемпе носкисене илемлĕ те çирĕп туса кăларасси оборудованирен килет. Ахальтен мар ĕнтĕ пухура станоксене тĕрĕс мар ĕçлеттерни çинчен нумай каларĕç. Оборудованипе усă курас ĕçре çитменлĕхсем пуррине эпир пĕлетпĕр, анчах ăна пĕтерме сахал тăрăшатпăр-ха. Акă, чăлхасем çинче çип вĕçĕсем нумай пулни нимрен те мар, хачăсем лайăх ĕçлеменнинчен кăна килет. Ун пек çитменлĕхсем сахал-и вара пирĕн? Илемлĕ те çирĕп чăлхасем туса кăларасси кашни операцие лайăх тунинчен килет. Çакна эпир пурте асра тытса тăма тивĕç.

Паха продукци туса кăларар

Чăлха çыхакан цех начальникĕ **С. Есина** юлташ цехри бригадăсем чи паха продукци туса кăларассишĕн кĕрешни çинчен каларĕ.

— СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ,—тет Есина юлташ,—халăха куллен кирлĕ япаласем туса кăларассине ÿстерес, вĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк программа кăларса тăратрĕ. Партипе правительство лартнă задачăна пурнăçлассишĕн кĕрешсе цехри работницăсем çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Ку пухура цех коллективне ят тиврĕ. Ун пирки ним те калаймăн—ĕçри çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пачĕç. Чăлхасемпе носкисене çирĕп те илемлĕ туса кăларас тесен, пирĕн малашне тата ытларах ĕçлемелле.

Чăн та, цехра чи паха продукци туса кăларассишĕн ăмăрту организациленĕ. Ăмăртăва цехри бригадăсем пурте хутшăннă. Чи паха продукци туса кăларакан бригада ятне илме нихăш бригада та тивĕçлĕ пулайман-ха. Мĕншĕн тесен бригадăсем çав ята илме май паракан условисене пурнăçлаймаççĕ. Нумай пулмасть чăлхасене сăрласа кăларакан цехрах паха мар 140 мăшăр чăлхана каялла пачĕç. Чăлхасем паха мар пулни машинăсене пĕр йышши чăлхасем çыхнă хыççăн тепĕр йышшисене çыхма кирлĕ пек майлаштарса çитерменнинчен килнĕ. Çакна мастер помощникĕсем те асăрхаман. Кун пек çитменлĕхсем пĕр хут кăна пулман. Паянхи пухура мастер помощникĕсен ответлăхне ÿстерме кирли çинчен тĕрĕс каларĕç. Вĕсем продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешмеççĕ-ха.

Манăн кунта чăлхасене сăрласа кăларакан цех пирки те икĕ-виçĕ сăмах каламалли пур. Унта пирĕн цех валли çип типĕтеççĕ. Çип типĕтмелли йĕркене пăснă пирки, унăн пахалăхĕ хăшпĕр чухне çителĕксĕр пулать. Эпĕ çав çитменлĕхе пĕтерме сĕнесшĕн, вара эпир те чăлхасене сăрлакан цеха лайăх пахалăхлă продукци тăратма пултаратпăр.

Пирĕн цехра продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешекен бригадăсем пур. Чăлха çыхакансен Алефтина Рябина ертсе пыракан бригади нормăна уйăхран уйăха ирттерсе тултарать, продукци сорчĕ енĕпе панă задание те ăнăçлă пурнăçлать. Парти членĕ Е. Вулих ертсе пыракан бригада та лайăх ĕçленине палăртмалла, вăл хăй çулталăкри нормăна сакăр уйăх хушшинчех ирттерсе тултарчĕ. Анчах та эпĕ: цехра чи паха продукци туса кăларакан бригада ятне илме пĕр бригада та тивĕçлĕ пулаймарĕ, терĕм. Бригадăсем хушшинчи социализмла ăмăртăва вăйлатсан, ку хисеплĕ ята тивĕçлĕ бригадăсем пулмалла.

Продукци пахалăхне лайăхлатасси ĕçлекенсен квалификацине ÿстернинчен килет. Çакăн çинчен паянхи пухура сахал каларĕç. Ку вăл работницăсен квалификацине ÿстерес ĕçе фабрикăра тивĕçлипе хакламанни çинчен те калать.

Пирĕн цехра ĕç квалификацине ÿстермелли курссем, мастер помощникĕсен курсĕ тата стахановла шкулсем ĕçлерĕç. Вĕсенче 50 çынна яхăн вĕреннĕ. Анчах та ку çителĕклĕ мар-ха.

Паха продукци туса кăларас ĕçре производство культурине ÿстерни, оборудованине юсавлă та таса тытса усрани, чĕртавара тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Продукци пахалăхĕ мĕнлине производствăра, малтан пуçласа вĕçне çитиех, тĕрĕслесе тăмалла. Тÿрех каламалла, ку ĕçсене эпир халиччен кирлĕ пек туса пыман.

Политикăлла-массăлла ĕç çинчен пĕр-ик сăмах каламалла. Цехсенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тухмаççĕ. Коллективăн ĕçри хастарлăхне ÿстерме политикăлла-массăлла ĕçе тĕпрен лайăхлатни кирлĕ.

Пурте хастарлă ĕçе тытăнар

Трибуна умĕнче—чăлха сăрласа кăларакан цех начальникĕ **Н. Трагудистис** юлташ. Вăл цех коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ йышăннă решенисене пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илни çинчен калать.

— Сĕршыври çăмăл промышленность умне лартнă задачăсене,—тет Трагудистис юлташ,—цех коллективĕ хăйĕн чи çывăх та тăван ĕçе вырăнне хакласа кĕтсе илчĕ. Работницăсем чăлхасемпе носкисем нумайрах туса кăларассишĕн, вĕсен пахалăхне лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Цехри 14 работница сакăр уйăх хушшинче çулталăкри нормăсене ирттерсе тултарчĕç, 13 çын çулталăкри нормăсене çывăх вăхăтрах тултарса çитереççĕ.

Фабрика директорĕ продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешес ĕçре чылай çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Мĕнрен килеççĕ-ха çав çитменлĕхсем? Сăлтавсем тĕрлĕ. Нимрен ытла çакна палăртмалла: пирĕнтен хăшпĕрисем продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тăракан пысăк задача пĕлтерĕшне тивĕçлипе ăнланса илеймен-ха. Пурте—фабрика директорĕнчен пуçласа цехри работницăсем таранах—хастарлă ĕçе тытăнмасăр, чăлхасемпе носкисен пахалăхне палăрмаллах лайăхлатма май килмест.

Фабрика продукцие палăртнă сортсем тăрăхах туса кăларать. Апла пулин те, лайăхрах сортлă продукци туса кăлармалли пур майсемпе те усă курнă теме çук-ха.

Чăлхасем стандартра палăртнинчен кĕскерех, çĕввисем илемсĕр пулаççĕ. Чăлха вĕллисене пÿклеме капрон сукки продукци пахалăхне чылай чакарать. Çак ыйтусене тахçанах татса пама май пулнă. Анчах çитменлĕхсене пĕтерме васкани курăнмасть-ха. Çавнашкал кăлтăксем продукци пахалăхĕ чакасси патне илсе пыраççĕ.

Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн малтан чăлха çыхакансем кĕрешме тивĕç. Вĕсем тивĕçлипе ĕçлемен пирки тата контролерсем тимсĕр пулнă пирки япăх продукци чăлха сăрлакан цеха çитет. Кун çинчен дирекци пĕлет, анчах вăл çав çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшни курăнмасть.

Халĕ эпир сăрламалли аппарата тĕрлĕ йышши чăлхасемпе носкисем хуратпăр. Çакă вăл продукцие мăшăрласа сортлас ĕçе кансĕрлет. Пĕр-пĕр йышши продукцие (чăлхасене, носкисене т. ыт.) уйрăммăн сăрламалла туни ку ĕçе чылаях çăмăллатма май парать. Çакна тума цехра яланах пĕр пин мăшăр чăлхапа носки пулмалла.

Фабрика директорĕ эпир туса кăларакан продукцие суту-илÿ организацийĕсем хурлани çинчен тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ. Кун пек тĕслĕхсем татах та пулма пултараççĕ. Мĕншĕн-ха эпир чăлхасемпе носкисене халĕ те хамăр туса кăларнă формăсемпе виçсе кăларатпăр? Кун пирки никам та каласа пама пултараймасть. Çав формăсене стандартлă формăсемпе улăштарма тахçанах вăхăт çитнĕ. Çакна вăхăта вăраха ямасăр тумалла, унсăрăн чăлха виçисене тĕрĕс пĕлсе мăшăрлама май çук. Стандартлă формăсене кирлĕ чухлех тупма май пур.

Петрунин юлташ фабрикăри пайсем пирки тĕрĕс каларĕ. Вĕсем продукци туса кăларассине ÿстерес тата унăн пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Снабжени пайĕ пирки те çавнах каламалла, вăл сăрламалли япаласене лайăх сыхласа усрама тăрăшмасть. Акă нумай пулмасть Иванов кладовщик айăпĕпе водород перекисĕ сĕвĕрĕлсе кайнă, хăйĕн малтанхи пахалăхне çухатнă.

Слесарьсенчен нумайăшĕ çамрăксем. Вĕсен ĕç опычĕ çукрах-ха. Анчах вĕсемпе никам та ĕçлемест. Слесарьсемпе семинарсем ирттерессине йĕркелени усăллă пулнă пулĕччĕ.

Фабрикăн продукци пахалăхне лайăхлатма условисем çителĕклĕ. Пурте хастарлă ĕçе тытăнни, мĕнпур майсемпе туллин усă курни кирлĕ.

Фабрика чысĕшĕн

Доклад тăрăх прение тухса каланă чылай юлташсем фабрика чысĕшĕн кĕрешессине вăйлатма кирлине, ĕç тухăçлăхне ÿстерме чăрмантаракан сăлтавсене палăртрĕç.

— Плана тултарма,—терĕ главнăй механик **Н. Ващилко** юлташ,—пирĕн кадрсем те, чĕртавар та çителĕклĕ. Апла пулин те, фабрика чылай кăтартусем енĕпе юлса пырать. Оборудовани тухăçлăхĕн планне тултарманни пысăк çитменлĕхсенчен пĕри пулать тесе шутлатăп эпĕ.

Мастер помощникĕсем оборудованипе лайăх ĕçлеттерессишĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ. Кашни сменăрах слесарьсем пур, тĕрĕссипе илсен, вĕсенчен нумайăшĕ кĕтесрен кĕтесе кăна сулăнса çÿреççĕ.

Малта пыракан работницăсем çинчен нумай калаçрĕç кунта. Чăн та, плана тултарассишĕн хастарлă кĕрешекенсем фабрикăра сахал мар. Вĕсен опычĕ ыттисемшĕн питĕ усăллă. Малта пыракансен опытне сарасси вара çителĕксĕр пулса пырать.

— Пирĕн нумай работницăсем,—тет механически мастерскойри ремонтировщик **И. Вулих** юлташ,—фабрика чысĕшĕн тивĕçлипе кĕрешмеççĕ-ха. Калининпа Хусан хулисенче пирĕн фабрика ĕçне тиркени нумайăшне тивĕçлипе хумхантармасть-ха. Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешесси пĕтĕм коллективăн чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Пĕр-пĕр пĕчĕк ĕçе пахалăхсăр туни те продукци пахалăхне чакарать.

Чăлха çыхакан цехри контролер **Е. Муращенко** юлташ техникăлла тĕрĕслÿ пайне критиклерĕ. Чăлхасене тепĕр хут пÿклеме тивни çинчен эпир нумайранпа калаçатпăр ĕнтĕ, тет вăл. Чăн та, ку вăл ĕç тухăçлăхне те, продукци пахалăхне те чакарать. Анчах техникăлла тĕрĕслÿ пайĕ çав çитменлĕхсем çине кирлĕ пек пăхмасть.

Пухура мастер помощникĕсене тĕрĕс критиклерĕç, тет **З. Михайлова** юлташ. Тепĕр чухне вара вĕсенчен килмен çитменлĕхсем те пулаççĕ. Нумай пулмасть чĕн татăлса кайрĕ. Антонов слесаре юсама ыйтрăмăр. Вăл вара ĕçе тытăниччен чылайччен пăркаланса тăчĕ, станок нумай вăхăт хушши ĕçлемесĕр ларчĕ.

Пуху йышăннă решенирен

Пирĕн фабрика умĕнче халĕ пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Сакăр уйăх хушшинчи плана фабрика тултарса çитереймен, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли задание пурнăçлайман, çав вăхăтрах чĕртавара ытлашши расходланă. Çав çитменлĕхсене пĕтерес, фабрика ĕçне палăрмаллах лайăхлатас тĕлĕшпе пуху çапла тума йышăнать:

Чăлха çыхакан цехăн:

а) оборудование графикпа палăртнă тăрăх юсаса пымалла;

б) чи лайăх продукци туса кăларассишĕн бригадăсем хушшинчи социализмла ăмăртăва вăйлатмалла;

в) хачăсене çывăх вăхăтрах юсаса çитермелле;

г) контролерсене штатпа палăртнă чухлех тупса çитермелле.

Чăлхасене сăрласа кăларакан цехăн:

а) чăлхасемпе носкисене пÿлсе ĕçре стахановла меслетсемпе усă курмалла;

б) çипе çирĕплетнĕ йĕрке тăрăх сăрламалла;

в) хĕрарăм чăлхисене шуратнă хыççăн сÿтă сăрпа сăрламалла.

Профсоюзăн фабрикăри комитечĕн продукци пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе палăртнă ĕçсем мĕнле пурнăçланса пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла.

Главнăй механик пайĕн чăлха çыхакан цех валли изделисене виçмелли формăсене çывăх вăхăтра кирлĕ чухлех тупса хатĕрлемелле.

Фабрика дирекцийĕпе фабкомăн социализмла ăмăртăва вăйлатма тăрăшмалла.

Совет Союзӗ тӑванла пулӑшни—Китай экономикине аталантарас ӗҫре пысӑк фактор пулса тӑрать

Финанспа экономика комитечӗн председателӗн заместителӗ Ли Фу-чунь тунӑ доклад

ПЕКИН, сентябрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Китай Халӑх Республикин Центральнӑй Халӑх Правительстви Совечӗн 26-мӗш ларӑвӗ пулса иртнӗ. Ларура Центральнӑй Халӑх Правительствин председателӗ Мао Цзэ-дун, председатель заместителӗсем Лю Шао-ци, Сун Цзин-лин, Ли Цзи-шэнь, Чжан Лань, Гао Ган тата советӑн ытти членӗсем пулнӑ. Ларура ҫавӑн пекех халӑхӑн политикӑлла консультаци совечӗн Пӗтӗм Китайри комитечӗн членӗсем, Центральнӑй Халӑх Правительстви министрӗсем, Центральнӑй Халӑх Правительствин Революцилле халӑх ҫар совечӗн членӗсем, Китай халӑх добровольцӗсен представителӗсем, обществӑлла организацисен руководителӗсем тата ыттисем те пулнӑ.

Ларура Государство администраци совечӗн Финанспа экономика комитечӗн председателӗн заместителӗ Ли Фу-чунь «Китай экономикин строительствинче СССР пулӑшу парас тӗлӗшпе Совет правительствипе ирттернӗ калаҫусем ҫинчен» тунӑ доклада итлесе ырланӑ. Ларура СССР правительствине тав туса яма послани текстне йышӑннӑ.

Ли Фу-чунь хӑйӗн докладӗнче Китай экономика строительствин пӗрремӗш пилӗк ҫуллӑх планне пурнӑҫлас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсем тата вӗсене пурнӑҫламалли майсем ҫинче тата Совет правительствипе иртгернӗ калаҫусен итогӗсем ҫинче тӗплӗн чарӑнса тӑнӑ.

Китай экономика строительствин пӗррemӗш пилӗк ҫуллӑх планне пурнӑҫламалли задачӑсемпе майсем ҫинчен калаҫа. Ли Фу-чунь ҫапла пӗлтернӗ. Председатель Мао Цзэ-дун кӑтартса панӑ тӑрӑх, экономика строительствин пӗррemӗш пилӗк ҫуллӑх планӗн тӗп задачисем ҫакӑн пек пулаҫҫӗ: чи малтан тӗп вӑйсене йывӑр индустрие аталантарма ямалла тата ҫӗршыва индустриализацилеме, наци оборонине тӗреклетме никӗс тӑвас пулать; ҫак строительствӑна пурнӑҫлама кадрсем хатӗрлемелле, транспортпа ҫыхӑнӑва, ҫӑмӑл промышленноҫа, ялхуҫалӑхне вӑйлатмалла тата суту-илӗве ӳстермелле; ялхуҫалӑхӗнче тата алӑсталӑх производствинче кооперативсене ялан пулӑшса тӑмалла; уйрӑм ҫынсен промышленность предприятийӗсемпе суту-илӳ предприятийӗсене тата уйрӑм хуҫалӑхлӑ хресченсемпе ремесленниксене хавхалантармалла.

Ҫаксем пурте, тенӗ Ли Фун-чунь, наци экономикинче социализмла сектора пӗрмай аслӑлатса пыма тата аталаннӑ производство никӗсӗ ҫинче халӑхӑн материальнӑй тата культурӑлла шайне майӗпен ӳстерсе пыма пулӑшаҫҫӗ.

Ҫакна каласа, Ли Фу-чунь ҫак ыйтусене палӑртнӑ:

1) Китайра экономика строительстви пынӑ вӑхӑтра экономикӑра социализмла сектор ялан аслӑланса пымалла. Ҫакӑ вӑл ҫӗршывӑн экономика аталанӑвӗнче тӗп ҫул-йӗр пулса тӑрать.

2) Хамӑрӑн экономика строительстви пынӑ вӑхӑтра капитализмла секторӑн пуҫарӑвӗпе кирлӗ таран усӑ курмалла.

3) Ҫӗршывӑн экономика строительствине пурнӑҫлама, ҫӗршыва индустриализацилеме рабочисемпе хресченсем хушшинчи союза тата ытларах тӗреклетмелле.

4) Хальхи индустрилле базӑсен пӗтерӗшне тата ытларах ӳстермелле тата индустрилле ҫӗнӗ базӑсем тума тытӑнмалла.

5) Аталаннӑ производство никӗсӗ ҫинче халӑхӑн материальнӑй тата культурӑлла шайӗ вӗҫӗмсӗр ӳсе пымалла. Пирӗн экономика строительствин тӗллевӗ ҫакӑ пулать ӗнтӗ. План тунӑ чухне ку тӗлӗшпе пур пек майсене шута илсе, конкретлӑ положенисем кӗртес пулать.

6) Ҫӗршыв экономикине аталантармалли пӗррemӗш пилӗк ҫуллӑх плана пурнӑҫлама хӑшпӗр резервсем палӑртса хурас пулать. Строительствӑн иккӗмӗш пилӗк ҫуллӑх планне пурнӑҫлама условисем, уйрӑмах ресурссемпе техника тӗлӗшӗнчен, хатӗрлени кирлӗ.

Совет правительствипе иртгернӗ калаҫусен итогӗсем ҫинче чарӑнса тӑрса, Ли Фу-чунь ҫапла каланӑ:

Совет правительстви пирӗн ыйтусене пурнӑҫлама килӗшрӗ, вӑл пирӗн экономика строительстви валли нумай вӑхӑта пысӑк пулӑшу пама йышӑнчӗ. Юлашки виҫӗ ҫул хушшинче Совет Союзӗ пулӑшнипе тума палӑртнӑ предприятисене туса лартас ӗҫре пулӑшнисӗр пуҫне, Совет правительстви 1959 ҫул вӗҫленнӗ тӗле 141 пысӑк предприяти туса лартма тата предприятисене аслӑлатма, вӑл шутра металлурги комбиначӗсем, тӗслӗ металсем тӑвакан предприятисем, ҫӗр кӑмрӑк шахтисем, нефть тасатакан предприятисем, машинӑсем тӑвакан заводсем, автомобиль завочӗсем, трактор завочӗсем, электростанцисем тата ытти предприятисем туса лартма пулӑшать. Ҫак предприятисене туса лартсан, тенӗ Ли Фу-чунь, пирӗн ҫӗршывра промышленность производствин шайӗ чылай ӳсет. Вӑл вӑхӑт тӗлне пирӗн ҫӗршывӑн хӑйӗн индустрийӗ пулать, пирӗн индустриализацин ҫирӗп никӗс пулать.

Ли Фу-чунь ҫакна палӑртнӑ: Совет Союзӗ малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен пулӑшать, ҫак пулӑшу вӑл нумай енлӗ. «Ҫӗнӗрен туса лартнӑ тата аслӑлатнӑ предприятисене ӗҫлесе тӑма тата пире техника персоналӗ вӗрентсе хатӗрleme пулӑшас тесе,—тенӗ вӑл,—Китая ҫӗнӗ заводсем тума кирлӗ рабочисемпе техника персоналне, хӑйсен специальноҫӗ тӑрӑх техникӑна вӗренме, Совет Союзӗнчи ҫакӑн пек предприятисене яма тата промышленноҫӑн тӗрлӗ облаҫӗсенчи специалистсене Китая яма Совет правительстви сӗнӳ пачӗ. Совет Союзӗ панӑ пулӑшу тата вӑл малашне те пирӗн ҫӗршывӑн экономика строительствине вӑйлатма паракан пулӑшу социализмла ҫӗршывӑн аслӑ интернационализм шухӑшӗ вӑйлӑ пулнине уҫҫӑн кӑтартса парать. Пире мӗн кирлӗ пулнӑ тата ҫӗн кирлӗ пулма пултарать тата хамӑр нӗччен тума вӑй ҫитереймен ӗҫсенче Совет правительстви пире яланах пулӑшнӑ, пирӗн ыйтусене пӗтӗмпех тивӗҫтернӗ. Тата та ытларах. Вӑл ҫавӑн пекех эпир хамӑр тума шутланӑ, анчах та плансем тунӑ чухне пурнӑҫлама кӗртмен ҫӗнӗ объектсем тума сӗнӳ пачӗ».

Ҫаксем пурте пӗсем Сталин юлташ мирпе демократи лагерӗнчи ҫӗршывсем хушшинчи экономикӑлла хутшӑнусем ҫинчен каланӑ ҫак сӑмахсене пӗтӗмпех ҫирӗплетсе параҫҫӗ: «...Ҫак ҫӗршывсем вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тапхӑрта экономика тӗлӗшпе пӗр-пӗрне тата экономика енӗпе пӗр-пӗрине килӗштерсе ӗҫлеҫҫӗ, пӗр-пӗрне пулӑшса тӑраҫҫӗ. Пӗр-пӗрине ҫакӑн пек килӗштерсе ӗҫлени оныҫӗ акӑ мӗн кӑтартса парать: халӑх демократи ҫӗршывӗсене Совет Союзӗ чӑн-чӑнах паха тата техника тӗлӗшпе квалификацилле пулӑшу парса тӑрать, ун пек пулӑшӑвӑ вӗсене капитализмла пӗр ҫӗршыв та парайман пулӗччӗ. Ӗҫ ҫав пулӑшу питех те йӳнӗ тата техника енӗпе чи паха пулнинче кӑна мар. Ӗҫ чи малтан акӑ мӗнре: ҫакӑн пек килӗштерсе ӗҫленин никӗсӗ пӗр-пӗрне тӳрӗ кӑмӑлпа пулӑшни тата экономикӑра пӗтӗмӗшле ӳсӗм тума тӑрӑшни пулать. Ҫакна пула ҫак ҫӗршывсенчи промышленность пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе аталанса пырать». Ку вӑл председатель Мао Цзэ-дун тата премьер Чжоу Энь-лай кӑҫалхи сентябрӗн 2-мӗшӗнче Маленков юлташпа Молотов юлташ патне янӑ саламлӑ телеграммӑра каланӑ ҫак сӑмахсене те ҫирӗплетсе парать: «...Совет Союзӗ Китай халӑхне паракан тӑванла пулӑшу Китай экономикине хӑвӑрт ура ҫине тӑратас тата ӑна планлӑ строительство ҫулӗпе аталантарас ӗҫре паха фактор пулса тӑрать».

Паллӑ ӗнтӗ, Совет Союзӗн пулӑшӑвӗсӗр пирӗн ҫӗршывӑн экономика строительствин пӗррemӗш пилӗк ҫуллӑх планӗ, тенӗ Ли Фу-чунь, хальхи вӑхӑтри пек пысӑк масштабсемпе тата пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе пурнӑҫланса пыман пулӗччӗ.

Китая индустриализацилес ӗҫри йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пуласси ҫинчен пӗлтерсе, Ли Фу-чунь юлашкинчен ҫапла каланӑ: Эпир Китайри Коммунистсен партийӗ тата председатель Мао Цзэ-дун ертсе пынине тата вӗсен политикине тӗрӗс пурнӑҫласа пырас пулсан, массӑсем ҫине таянса ӗҫлес пулсан, эпир Совет Союзӗн опытне чун-чӗререн вӗренсе пырас пулсан, хамӑр ӗҫри ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене тӑтӑшах пур енчен те тӗплӗн сӑнаса пырсан, эпир наука меслечӗсемпе усӑ курсан тата тӳрӗ шухӑшпа, тӑрӑшса, ҫине тӑрса ӗҫлесен, сӑпайлӑ пулсан—Китайӑн экономика строительствинче ҫитӗнӳ тума пулать.

Ларура тухса калакансем Ли Фу-чунь докладне ырланӑ тата Китая пулӑшу панӑшӑн Совет Союзне тав тунӑ.

Ҫорейӑри перемири пирки

ПЕКИН, сентябрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ ӗнер Кэсонран ҫапла пӗлтернӗ:

Паян Корея халӑх ҫарӗн тӳрех репатриаци тумалла пулман тыткӑнри тӑватӑ салтакӗ, Ли Сын Ман агенчӗсен контролӗнчен хӑтӑлса тухса, хӑйсем киле таврӑнассишӗн пулни ҫинчен пӗлтернӗ. Ку таранччен пӗтӗмпе тыткӑнри 14 кореец тата китаец, хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр, ӑнлантару ӗҫӗ пуҫланиччен ирӗке тухнӑ. Ӑнлантару ӗҫӗ тепӗр 10 кунтан пуҫланмалла.

Паян репатриаци тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен комисси аллине тыткӑнри 1.994 корееца панӑ. Ҫапла ӗнтӗ, репатриаци тӗлӗшпе ӗҫлекен комисси ӗҫлеме пуҫланӑранпа унӑн аллине тыткӑнри 3.982 корееца тата 5.636 китаеца панӑ.

ДЕМОКРАТИЛЛЕ КОРЕЯ ХАЛӐХ РЕСПУБЛИКИНЧЕ СПЕЦИАЛИСТСЕМ ХАТӖРЛЕҪҪӖ

ПХЕНЬЯН, сентябрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑри тӗп телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, специалистсем массӑллӑн хатӗрлес тӗллевпе Демократилле Корея Халӑх Республикинчи министерствӑсем ҫумӗнче тата предприятисенче ҫӗнӗ техникумсем тата квалификацие ӳстермелли шкулсем тӑваҫҫӗ. Техникумсенче 3 ҫултан пуҫласа 4 ҫула ҫитиччен вӗрентмелле тунӑ. Вӗсем машинӑсем тӑвакан, сӑрт-ту, металлурги, строительство промышленноҫӗ валли тата халӑх хуҫалӑхӗн ытти отраслӗсен валли те специалистсем хатӗрлеҫҫӗ. Техникумсемпе шкулсенче вӗренекенсене стипенди парса тӑраҫҫӗ.

КИТАЙРА КОНТРРЕВОЛЮЦИОНЕРСЕНЕ ТЫТНӐ

ШАНХАЙ, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). «Синьвэньжибао» хаҫат ҫапла пӗлтерӗ: Шанхайри общество хӑрушсӑрлӑхӗн органӗсем контрреволюционерсен тепӗр ушкӑнне арестленӗ. Ҫак ушкӑна Ли Чэн-хуа тата Ся Цзэ-пин ертсе пынӑ. Ҫак шайкӑна вӗнӗ ироӗрсем провокацилле хыпарсем сарнӑ, ӗҫсыннисем ҫине хӗсӗрлесе тапӑннӑ, йӗркесӗрлӗхсем кӑларнӑ.

Сентябрӗн 16-мӗшӗнче «Синьминьбао» хаҫат Шанхайри общество хӑрушсӑрлӑхӗн органӗсем Тан Мин-гуя тата Сюэ Ли-хона арестлени ҫинчен пӗлтернӗ. Вӗсем халӑх влаҫӗн органӗсене хирӗҫ контрреволюцилле ӗҫсем туса пурӑннӑ.

Совет Союзӗпе Финлянди хушшинче перемири ҫинчен килӗшӳ тунӑранпа 9 ҫул тултарнӑ ятпа Хельсинкире пулса иртнӗ пуху

ХЕЛЬСИНКИ, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Финляндипе Совет Союзӗ хушшинче перемири ҫинчен килӗшӳ тунӑранпа 9 ҫул тултарнӑ ятпа Хельсинкире пуху пулса иртнӗ. Пухӑва Финляндипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх обществи организациленӗ. Пухура республика президенчӗ Паасикиви, премьер-министр Кекконен, Финляндипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх обществине ертсе пыракан деятельсем, Финлянди столицин представителӗсем пулнӑ.

Пухура ҫавӑн пекех Совет Союзӗн, Китай Халӑх Республикин, халӑх демократи ҫӗршывӗсен дипломатилле представителӗсем пулнӑ.

Финляндипе Совет Союзӗ хушшинче перемири ҫинчен килӗшӳ тунӑранпа 9 ҫул тултарни ҫинчен сутӗҫ министрӗ Виролайнен доклад тунӑ. Вӑл перемири ҫинчен килӗшӳ туни Финляндипе Совет Союзӗ хушшинчи ҫыхӑнусенче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫласа янине палӑртнӑ. Финлянди, тенӗ вӑл, ҫак иртнӗ 9 ҫул хушшинче пулса иртнӗ аталану пирки тата результатсем пирки кӑмӑллӑ пулма пултарать.

Совет Союзӗпе Финлянди хушшинче перемири ҫинчен килӗшӳ тунӑранпа 9 ҫул тултарнӑ ятпа Финляндипе Совет артисчӗсен концерчӗ пулнӑ.

Аденауэр ушкӑнӗ Хӗвеланӑҫ Германири ӗҫҫыннисен прависем ҫине тапӑнать

БЕРЛИН, сентябрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Хӗвеланӑҫ Германире бундестаг суйлавӗ пулса иртнӗ хыҫҫӑн реакци Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсем ҫине, вӗсен пӗрлӗхне пӗтерсе лартма тӑрӑшса, вӑйлӑн тапӑнма пуҫланӑ.

«Нейес Дейчланд» хаҫат Дюссельдорфран илнӗ хыпарта Аденауэр Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсен юхӑмӗн пӗрлӗхне хирӗҫ пуҫланӑ кампани ҫинчен тӗплӗн каласа парать. Ҫак кунсенче Бонн хулинче Хӗвеланӑҫ Германири служащисен профсоюзӗпе суту-илӳ служащийӗсен профсоюзне Аденауэр партийӗ раскольникла профсоюза кӗртме палӑртнине пурнӑҫласси ҫинчен вӑрттӑн калаҫусем иртгернӗ. Ҫак калаҫусем вӑхӑтӗнче христианла демократсен союзӗн представителӗсем ҫапла пӗлтернӗ: Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсен пӗрлешӗвӗ ультиматума йышӑнмасть пулсан тата «правительствӑна пӑхӑнса тӑрас ҫул ҫине» тӑмасть пулсан, христианла демократсен союзӗ халех раскольникла профсоюзсем тума тытӑнать.

АДН агентстви служащисен профсоюзӗпе тата суту-илӳ служащийӗсен профсоюзӗпе калаҫусем иртгернисӗр пуҫне христианла демократсен союзӗ Бонра, Кельнра, Дюссельдорфра, Кенигсвинтерта канашлусем иртгерни ҫинчен пӗлтерет. Вӑл канашлусенче Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсен юхӑмӗ ҫине тапӑнасси ҫинчен сӳтсе явнӑ.

«Нейес Дейчланд» хаҫат «Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Бонри корреспонденчӗ каланине илсе кӑтартать. Америка корреспонденчӗ каласа пани Аденауэр ушкӑнӗ Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсене Хӗвеланӑҫ Германири империалистсен интересӗсене пӑхӑнтарма шутланине ҫирӗплетсе парать. Ҫак корреспондент Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсен пӗрлешӗвне «профсоюзсене государство контрольне пӑхӑнтармалла туса ҫӗнӗлле организацилесси ҫинчен» ультиматум панине палӑртать. Хӗвеланӑҫ Германири профсоюзсем ҫак ультиматума пурнӑҫлама килӗшмесен, профсоюзсен иккӗмӗш пӗрлешӗвне туса хураҫҫӗ. Ҫапла вара профсоюзсен руководителӗсем Хӗвеланӑҫ Германири рабочи класӑн пӗртен-пӗр представителӗсем пулма пӑрахаҫҫӗ.

Аденауэр ушкӑнӗ рабочисене хирӗҫ туса иртгерекен ӗҫсене Хӗвеланӑҫ Германири ӗҫсыннисем протестлени ҫинчен Берлинри демократилле хаҫатсем материалсем пичетлеҫҫӗ.

ООН Генеральнӑй Ассамблейин Генеральнӑй комитечӗн ларӑвӗ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер кӑнтӑрла ООН Генеральнӑй Ассамблейин Генеральнӑй комитечӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. ООН генеральнӑй секретарӗ Генеральнӑй Ассамблейӑн VIII-мӗш сесси ӗҫсене декабрӗн 8-мӗшӗнче вӗҫлеме сӗннине комитет ырланӑ, малтанлӑха палӑртнӑ кун йӗркине ҫирӗплетме тытӑннӑ. Кӑнтӑр Африка Союзӗ кун йӗркине Кӑнтӑр Африка Союзӗнче Инди ҫыннисене хӗсӗрлени ҫинчен тӑракан ыйтӑва—20-мӗш пункта тата Кӑнтӑр Африкӑра Кӑнтӑр Африка Союзӗн правительстви тытса пыракан сегрегаци политикине пула (халӑха расӑсем тӑрӑх уйӑрни—Ред.) тухнӑ расӑллӑ конфликт ҫинчен тӑракан ыйтӑва—21-мӗш пункта кӗртессине хирӗҫ пулнӑ.

Генеральнӑй комитет ҫак ыйтусене иккӗшне те Генеральнӑй Ассамблейӑн кун йӗркине кӗртме йышӑннӑ.

Малтанлӑха палӑртнӑ кун йӗркин ытти пайне сӳтсе явнӑ чухне СССР делегачӗ Я. А. Малик 70-мӗш тата 72-мӗш пунктсене, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн Уставне пӑхса тухма хатӗрленесси пирки тӑракан ыйтусене, кун йӗркине кӗртессине хирӗҫ каланӑ. Совет представителӗ ҫакна палӑртнӑ: ҫак пунктсене кун йӗркине кӗртнипе хӑшпӗр державӑсем ООН Уставне вӑйсӑрлатас тата хавшатас тӗлӗшпе усӑ курма пултараҫҫӗ тата мир ӗҫне сиен кӳреҫҫӗ.

Польша представителӗ Кац-Сухи ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттарнӑ: Устава улӑштарасси ҫинчен панӑ сӗнӳсем вӗсем тӗнчери лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатас тата пӗтӗм тӗнчере пӗр-пӗрнипе килӗштерсе ӗҫлес тата мире тӗреклетес тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсене чӑрмантарма кӑна пултараҫҫӗ. Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Англи представителӗсем: ҫак пунктсене кун йӗркине кӗртни ӗҫе ун пек кансӗрлеме пултараймасть, тенӗ. Вӗсем каланӑ тӑрӑх, Устава пӑхса тухмалла пуласси ҫинчен панӑ сӗнӳ вӑл «ООН-а лайӑхлатас» шухӑшран тухса тӑрать пулать.

Дискусси пынӑ вӑхӑтра Совет Союзӗн представителӗ Я. А. Малик тепӗр хут ҫакна палӑртнӑ: хальхи вӑхӑтра, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗ умӗнче пӗтӗм тӗнчере хӑрушсӑрлӑх туса хурас тӗлӗшпе пысӑк задачӑсем тӑнӑ чухне, Устава пӑхса тухасси ҫинчен тӑракан ыйтӑва сӳтсе явни тӗнчери лару-тӑру лайӑхланма палӑрнине тӳсме ҫук начарлатнӑ пулӗччӗ, вӑл ҫӗнӗ хирӗҫӳсем кӑна кӑларма пултарать. Анчах та комитет 12 сасӑпа ҫак ыйтусене кун йӗркине кӗртнине ырланӑ. Совет Союзӗпе Польша ҫак сӗнӗве хирӗҫ сасӑланӑ.

Кун хыҫҫӑн комитет Генеральнӑй Ассамблея ытти мӗнпур ыйтусене малтанлӑха кун йӗркине кӗртнине ырланӑ, вӑл ыйтусене комитетсем тӑрӑх валеҫсе панӑ.

Корея ыйтӑвне пӗррemӗш (политикӑлла) комитетра пӑхса тухма йышӑннӑ.

Сентябрӗн 17-мӗшӗнчи пӗрлехи ларура пӗтӗмӗшле прени пуҫланать.

ООН Генеральнӑй Ассамблейин саккӑрмӗш сессийӗ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). ООН Генеральнӑй Ассамблейин саккӑрмӗш сессийӗн ӗнер ирхине пулнӑ пӗрлехи ларӑвӗнче пӗтӗмӗшле пренисем пуҫланнӑ. Ларура США государство секретарӗ Даллес сӑмах тухса каланӑ. Вӑл тухса каланӑ хыҫҫӑн ирхи лару хупӑннӑ.

Америка Гренландие оккупацилет

КОПЕНГАГЕН, сентябрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Дани правительстви ҫак кунсенче ООН генеральнӑй секретарӗ Хаммаршельд патне нота ярса панӑ. Гренланди текех колони вырӑнне шутланмалла мар, вӑл Данин тулли праваллӑ пайӗ пулса тӑрать, тесе Дани правительстви официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ. Ҫакна май Дани ООН-ӑн хӑйсем тӗллӗн тытӑнса тӑман территорисен информаци енӗпе ӗҫлекен комитетӗнче членра тӑма килӗшменни ҫинчен тата вӑл комитета Гренланди ҫинчен текех информаци тӑратма чарӑнни ҫинчен пӗлтернӗ.

Гренланди кӑҫалхи июнӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа Дани ҫӗршывӗн пайӗ шутланать. Ун чухне король Данин ҫӗнӗ конституцине ҫирӗплетнӗ. Ҫак конституци тӑрӑх Гренланди Дани колонийӗ пулса тӑни ҫинчен калакан статус пӑрахӑҫа тухать. Дани правительстви ООН Генеральнӑй секретарӗ патне ҫакӑн пирки нота ярса панӑ ӗнтӗ.

Гренландин ҫӗнӗ статусӗ Гренланди халӑхне мӗн парасси халӗ сахал паллӑ-ха. Халлӗхе Данин пӗр палатӑллӑ ҫӗнӗ парламентне — фолькетинга икӗ депутат суйлама право кӑна панӑ.

Гренландин ҫӗнӗ статусӗ утрава Америка ҫарӗсем оккупацилесе тӑрас ӗҫре нимӗнле улшӑну та тумасть. Вӗсем халиччен Гренландире мӗнле хуҫа пулса тӑнӑ, халӗ те ҫавӑн пекех хуҫа пулса юлаҫҫӗ. Ҫакна ӑна Данири Ритсаус бюро телеграф агентстви те ҫирӗплетсе парать. Вӑл сентябрӗн 14-мӗшӗнче американецсем Гренланди территорийӗнче чылай ҫар базисене аслӑлатма шутлани ҫинчен пӗлтернӗ. Ҫак пӗлтерӳрех Дани самолечӗсене Гренландири пӗр аэродромпа кӑна усӑ курма ирӗк пани ҫинчен каланӑ. Америка влаҫӗсем Дани самолечӗсене пулӑ тытма пулӑшас тӗлӗшпе вӗҫсе ҫӳреме, ҫавӑн пекех тата Гренландире почтӑпа пассажирсем турттарса ҫӳреме пачах чарса лартнӑ.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчӗ Фей Тулерен (Гренландири авиабаза) пӗлтернӗ тӑрӑх, Америка сывлӑш-ҫар вӑйӗсен бомбардировщикӗсем ҫак базӑпа усӑ курма тытӑннӑ ӗнтӗ. «Халӗ ҫапла пӗлтерме пулать,—тет Фей,—юлашки уйӑхсенче инҫете вӗҫекен «В-36» йышши бомбардировщиксем США-ран кунта килсе ҫитнӗ.

Тулене килсе ҫитнӗ корреспондентсем, тет Фей, чылай строительство ӗҫӗсене, пӗчӗк ӗҫсене шутламасан, туса пӗтерниие курнӑ.

Иранри лару-тӑру пирки

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). «Дад» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Иранри почта, телеграф тата телефон министрӗ Фарзанеган США-на «Ирана ҫар пулӑшӑвӗ парас ӗҫ мӗнле пынине сӑнаса тӑма» тухса каять.

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтерн тӑрӑх, Мосаддыка, унӑн кабинечӗн членӗсене тата «наци юхӑмӗн» парламентри фракци членӗсене (пурӗ 50 ҫынна) ҫар сучӗ суд тӑвать.

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 17-мӗшӗнче Иранӑн наци оборонин министрӗн заместителӗ пулнӑ Мохавна генерала тата полици начальникӗ пулнӑ Модабер генерала арестленӗ.

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Тегеранри табак фабрикинче 12 рабочие арестленӗ.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ ИРАН НЕФТЬНЕ ХАЙСЕН АЛЛИНЕ ЯРСА ИЛЕҪҪӖ

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). «Техране мосаввар» журнал сентябрӗн 18-мӗшӗнче тухнӑ номерте ҫапла ҫырать: икӗ эрне каялла Тегерана килсе ҫитнӗ Япони представителӗсем Иранри финанс министрӗпе, наци экономикин министрӗпе тата Иранри нефть компанийӗн руководителӗсемпе калаҫусем иртгернӗ.

Журнал ҫырнӑ тӑрӑх, Япони компанийӗн представителӗсем Иранран ҫулсерен 50 миллион долларлӑх нефть илсе тӑма Иранпа договор тума шутлаҫҫӗ.

Журнал ҫырнӑ тӑрӑх, Тегерана килсе ҫитнӗ японецсем акцисен пысӑк пайӗ Америка правительстви аллинче тӑракан компани представителӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫак журнал пӗлтернӗ тӑрӑхах, иртнӗ эрнере Иран правительстви «Англи тата Америка представителӗсемпе ҫыхӑну тытма тата калаҫусем иртгерме хатӗрленес шутпа» нефть ыйтӑвне сӑнаса вӗренме йышӑннӑ. Шах юн ҫӗршывсенчи авторитетлӑ дипломатсенчен пӗрне ҫак ыйту тӑрӑх калаҫусем иртгерме полномочи панӑ, унӑн хушамачне каламаҫҫӗ. Нефть ыйтӑвӗ тӗлӗшпе пыракан калаҫусен результачӗсем ҫинчен ҫак ыйтӑва татса панӑ хыҫҫӑн кӑна пӗлтереҫҫӗ.

ГОМИНДАН БАНДИСЕМ БИРМАРАН ҪАПЛАХ ТУХСА КАЙМАҪҪӖ

ДЕЛИ, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Рангунри радио ҫапла пӗлтернӗ: США, Бирма, Таиланд представителӗсемпе гоминдановецсем хушшинче пыракан калаҫусем чарӑнса ларнӑ. Бирма делегацийӗ гоминдан ҫарӗсене илсе тухса кайма тӗрӗс срок кӑтартса пама ыйтнӑ. Ҫак ыйтӑва йышӑнман пирки Бирма делегацийӗ ларуран тухса кайнӑ.

БРАЗИЛИРИ ГРУЗЧИКСЕН ЗАБАСТОВКИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчӗ Ресифе хулинчен (Бразили) пӗлтернӗ тӑрӑх, портра ӗҫлекен грузчиксен профсоюзӗ, рабочисен ӗҫ укҫине ӳстерме ыйтса, забастовка пуҫласа янӑ.

Чи лайӑх тракторист

СССР Вӑрманпа хут промышленность министерстви тата вӑрманпа хут промышленноҫӗнчи рабочисен профсоюзӗн Центральнӑй комитечӗ вӑрманта ӗҫлекенсен иккӗмӗш кварталти социализмла ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухнӑ. Вӗсем трактористсем хушшинчи ӑмӑртура пурӗ 9 ҫын, вӑл шутра «Чувашлес» треста пӑхӑнса тӑракан Алтышевӑри вӑрманпромхозра ӗҫлекен Н. И. Вельдяев юлташ мала тухнине палӑртнӑ. Вӗсене пурне те хисеплӗ ят—«Чи лайӑх тракторист» ятне памалла тунӑ.

Н. И. Вельдяев юлташ иккӗмӗш кварталта КТ-12 тракторпа 400 метртан 1.967 кубометр йывӑҫ турттарса кӑларнӑ, кашни сменӑра вӑтам шутпа 47 кубометр турттарнӑ, нормӑна 121 процент тултарнӑ.

Виҫҫӗмӗш кварталта Н. И. Вельдяев юлташ тата тухӑҫлӑрах ӗҫлет, нормӑна тӑтӑшах иртгерсе тултарать.

Ҫӗнӗ ҫуртсем

ҪӖМӖРЛЕ. Экстракт тӑвакан «Большевик» завод кӑҫал рабочисемпе служащисем валли виҫӗ чул ҫурт лартрӗ, икӗ ҫурта тӗпрен юсарӗ. Кӑҫал ҫӗнӗ клуб тума тытӑнаҫҫӗ.

И. ЕВГЕНЬЕВ.

Сӗт илеҫҫӗ

ЕЛЧӖК. «Трактор» колхоз ҫулсеренех государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем памалли задание срокчен тултарать.

Кӑҫал государствӑна сӗт-ҫу памалли задание июлӗн 20-мӗшӗ тӗлне тултарнӑ. Халӗ колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх сӗт валеҫсе параҫҫӗ, колхоз производствинче тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлекен колхозниксен ҫемйисем сӗт нумай илеҫҫӗ.

А. КУЧКОВ.

Кӗскен

ЕТӖРНЕ. Сталин ячӗпе тӑракан колхозра обществӑлла ҫуртсемпе колхозниксен килӗсене радио кӗртеҫҫӗ. Линисене карса тухнӑ. Ҫак кунсенчех ҫӗнӗ Етӗрне, Елкино тата Ирҫе ялӗсене радио кӗртсе ҫитереҫҫӗ.

М. ФЕДОРОВ.

ПШЛЕЙ. Районти культура ҫурчӗпе ВЛКСМ райкомӗ йӗркеленӗ агиткультбригада 11 колхозра пулса А. Эсхель ҫырнӑ «Виҫӗ туй» пьесӑна лартса пачӗ.

Бригада членӗсем СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сесси материалӗсем, ялхуҫалӑх налогӗн ҫӗнӗ Законӗ ҫинчен тата Г. М. Маленков юлташ сессире каланӑ сӑмах тӑрӑх лекцисем вуласа панӑ.

П. НИКОЛАЕВ.

Футбол

РЕСПУБЛИКА КУБОКНЕ ИЛЕССИШӖН

Колхоз командисем хушшинче футбол вӑййипе республика кубокне илессишӗн иртгерекен ӑмӑрту вӗҫленсе пырать.

Сентябрӗн 18-мӗшӗнче Шупашкарти «Энергия» спорт обществин стадионӗнче ҫур финалти вӑйӑсем пулса иртрӗҫ. Чи малтанах Октябрьски районӗн футбол командипе Чкаловски район команди тӗл пулса вылярӗҫ. Вӑйӑ 5:2 шутпа Октябрьски районӗн спортсменӗсем ҫӗнтернипе вӗҫленчӗ.

Иккӗмӗш ҫур финалта Сӗрпӳ районӗнчи «Новая жизнь» колхоз футбол командипе Пӑрачкав районӗн футбол команди вылярӗҫ. Сӗрпӳсем 4:0 шутпа ҫӗнтерчӗҫ.

Ҫапла вара финала Октябрьски районӗн тата Сӗрпӳ районӗнчи «Новая жизнь» колхоз командисем тухрӗҫ. Ҫак вӑйӑ паян Сӗрпӳре пулать.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

К И Н О

«РОДИНА»—сентябрӗн 20-мӗшӗнче 10, 12 тата 14 сехетре ачасене кӑтартма ӳкернӗ кинофильмсен сборникӗ («Непослушный котенок», «Волшебный магазин» т. ыт. те), 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре «Пармская обитель» (иккӗмӗш сери).

«УДАРНИК» — сентябрӗн 20-мӗшӗнче илемлӗ фильм «Римский-Корсаков».

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКАРИ ЭКРАНСЕМ ҪИНЧЕ

„З В Е З Д А“

ятлӑ илемлӗ фильм кӑтартма пуҫлаҫҫӗ

Фильм сценарине Э. Казакевич повеҫӗ тӑрӑх П. Фурманский ҫырнӑ.
Фильма лартаканӗ—Латви ССР искусствисен тава тивеҫле деятелӗ Александр Иванов.
Композитор — В. Пушков.
Рольсене вылянӑ артистсем:
А. Вербицкий, И. Радченко, Л. Сухаревская, А. Покровский, Н. Крючков, В. Меркурьев, О. Жаков, А. Хлопотов, М. Сан-Ани, П. Волков, В. Марьев, А. Степанов, Ю. Абих, А. Файт, Е. Тетерин.
Ленин орденлӗ «Ленфильм» киностудийӗ ӳкернӗ, 1949 ҫул.

Хаҫат-журнал ҫырӑнса илӗр!

1953 ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталта илсе тӑма
„КОММУНИЗМ ЯЛАВЕ“, „СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ“
„МОЛОДОЙ КОММУНИСТ“, „ҪАМРӐК КОММУНИСТ“
хаҫатсем тата
„АГИТАТОР БЛОКНОЧӖ“
(вырӑсла тата чӑвашла тухаканнисене) ҫырӑнса илӗр.

Хаҫат-журнал илсе тӑма «Союзпичет» уйрӑмӗсенче тата кашни почтӑра ҫырӑнма пулать. Письмоносецсем граждансен килӗсенче, хаҫат-журнал сарма уйӑрнӑ ҫынсем заводсемпе фабрикӑсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышӑнаҫҫӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-60, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 09358 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.